# Литература çулталăкне литературăсăр кĕтсе илмĕпĕр-и? ● 3 стр.

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

ХЫПАР

1997 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

# Чăваш хĕрарăмĕ

43 (861) №, 2014, юпа, 25

Хакĕ ирĕклĕ.

16+

Сĕтел айĕнче... тăватă хĕр çывăрнă. **2 стр.**

Инкек халăха яланах пĕрлештерет. **4 стр.**

Океан хĕрринче канас тенĕччĕ пĕррехинче. **5 стр.**

Çамрăк йывăççене хĕл каçма витмелле-и? Пĕркеленчĕксенчен – çăмартапа хăйма хутăшĕ. **8 стр.**

Люстра çинчи фен-шуй. Каякана чармалла мар. **9 стр.**

21 çул пĕрле пурăннă хыççăн уйрăлнă... **11 стр.**

Мунча мĕншĕн шăмат кун хутмалла? **12 стр.**

"Чăваш хĕрарăмне" 2015 çулăн пĕрремĕш çуррине илсе тăмашкăн /январь-июнь/ Раççей почтин кашни уйрăмĕнчех çырăнма пулать.
Хакĕ: 325,08 тенкĕ.

*Ыр ут çине ларакан ырман, çĕнĕ кĕрĕк тăхăнакан шăнман.*

Каларăш.

## ÇАНТАЛĂК



| | кăнтăрла | çĕрле | |
|---|---|---|---|
| 25.10 | – 9 | – 14 | ▬ |
| 26.10 | – 9 | – 11 | ▬ |
| 27.10 | – 6 | – 11 | ▬ |
| 28.10 | + 1 | – 1 | ▬ |
| 29.10 | + 2 | + 1 | ▬ |
| 30.10 | 0 | + 1 | ▬ |
| 31.10 | – 1 | – 8 | ▬ |



10 стр.

# Валерий ЯКОВЛЕВ: «Куракан хĕлхемĕ вăй парать»

**К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх драма театрĕн пултарулăх ертӳçи, СССР халăх артисчĕ, Раççей тата Чăваш Патшалăх премийĕсен лауреачĕ Валерий Яковлев 75 çул тултарчĕ. Кашни тĕл пулмассерен чĕлхе пуянлăхĕпе, анлă тавра курăмĕпе, чун илемĕпе тыткăнлать вăл. Унпа калаçса тăранма çук. Хальхинче те, ĕçтешĕсем чăтăмсăр кĕтсе тăнине пăхмасăрах, ун çинчен тата ытларах пĕлес килчĕ.**

**– Валерий Николаевич, çак кунсенче сире тăван тăрăхра ентешсем уйрăммăн саламларĕç. Çуралнă района тăтăш кайса çӳреме май килет-и?**

– Шел те, халĕ сайра хутра кăна. Анне пурăннă чухне час-часах çӳреттĕмĕр. Çуралса ӳснĕ кил-çурт пушă ларать. Çапах та ăна Луиза аппа сăнаса-пăхса тăрать. Асăнмалăх пултăр тесе атте – 100, хам 70 çул тултарнă тĕле анкартинче парк йĕркелеме палăртрăмăр. Шăмăршă район ертӳçи Валерий Фадеев тăрăшнипе ял-йышпа, шкул ачисемпе пĕрле 300 ытла йывăç лартрăмăр. Анчах ун чухне шăрăха пула нумайăшĕ вăй илеймесĕрех типрĕ. Кăçал каллех Валерий Петрович пулăшнипе 100 ытла хунав лартса хăвартăмăр.



КУЛЬТУРА



**Юпа уйăхĕн пуçламăшĕнче Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ Чăваш патшалăх çамрăксен театрĕ Калмăк Республикинче гастрольте пулнăччĕ. Куракансене «Один дома», «Собаки», «Суя пурнăç», «Тăм тивнĕ чечексем» ĕçсемпе паллаштарнăччĕ вăл. Ку эрнере Элистари Б.Басангов ячĕллĕ Наци драма театрĕн артисчĕсем Чăваш Республикине килсе çитрĕç. Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта, Канашра, Çĕмĕрлере «Араш», «Сердце матери», «Сказка Белого Месяца» спектакльсем кăтартрĕç. Ку ĕç «Театр – культура территорийĕ» проектпа килĕшÿллĕн пулса пырать.**

# Хăнара – калмăк театрĕ

Калмăк Республикин театрĕ Чăваш Енре халĕччен пулман. Сцена ăстисем туслăх çирĕпленессе, малашне те пĕрле ĕçлессе шанаççĕ.

Раççей Федерацийĕн тата Калмăк Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Наци драма театрĕн илемлĕх ертÿçи Борис Манджиев Чăваш, Кăркăс Республикисен искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕпе Иосиф Дмитриев-Трер режиссерпа пĕрле вĕреннине пĕлтĕмĕр. Чылай çул иртсен тин тĕл пулчĕç вĕсем. Çак фестиваль тахçанхи пĕлĕшĕпе курнăçтарнишĕн хĕпĕртенине пытармарĕ Иосиф Александрович. Ку тĕл пулăва шăпах наци театрне аталантарма тăрăшакансем пухăннине палăртрĕ вăл.

Борис Манджиев 1992 çулта пирĕн тăрăхра пулнă, Раççей шайĕнчи фестивале хутшăннă. Хăй каланă тăрăх, куракансем ăшшăн йышăнни çĕнĕ ĕçе пуçăнма хавхалантарнă. Ача-пăча наци драматургийĕн регионсен хушшинчи форумĕ унăн «Араш» спектаклĕпе уçăлчĕ. Ун урлă 1943 çулхи хĕлле Çĕпĕре ирĕксĕрлесе ăсатнă калмăк халăхĕн синкерлĕ шăпи куç умне тухса тăрать. Ăна аса илÿ тăрăх çырнă. Пĕчĕк Араш ашшĕ фронтран таврăнасса кĕтет. Унпа тĕл пуласса çав тери ĕненет вăл. Ахальтен мар кашни кун станцие чупать. Юлашкинчен арçын ача çывхарса килекен пуйăса чарса ашшĕ патне кайма шухăш тытать. Анчах унăн сассине ниме пăхмасăр иртекен пăравус хуплать. Юрпа витĕннĕ тавралăх пушанса юлать. Пин-пин калмăк çыннин вăхăтсăр таталнă шăпине сăнлать çак ĕç.

«Сказки Белого Месяца» юмахри лару-тăру çуркуннен пĕрремĕш кунĕпе – Цаган Сар уявпа – çыхăннă. Ĕне шыракан арçын ача тĕрлĕ пăтăрмаха çакланать. Çав вăхăтрах халăх юрри-ташшипе килелнет вăл. Темле йывăр пулсан та ача ĕнене вăрăсен аллинчен туртса илме май тупать.

«Сердце матери» спектакль те хăйне евĕрлĕ. Усал-тĕсел çавăрса илнĕ ывăлне çăлассишĕн амăшĕ хăйĕн чĕрине каларса парать.

Фестиваль вăхăтĕнче наци драматургийĕн лабораторийĕ ĕçлерĕ. Ăна паллă критик Ирина Мягкова йĕркелесе пычĕ. Эксперт-сен йышĕнче Мускав режиссерĕ, Раççей искусствăсен тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Валерий Персиков, Питĕртен килнĕ театр критикĕ Сергей Фишер пулчĕç. Форума Чăваш Ен, Пушкăртстан, Екатеринбург, Санкт-Петербург, Мускав драматургĕсем хутшăнчĕç. Конкурса Чăваш, Удмурт, Коми Республикисен, Мускав, Питĕр, Новосибирск, Екатеринбург, Самар, Чĕмпĕр, Анапа, Калуга, Воронеж, Беларуç, Литва авторĕсем 60 ытла ĕç сĕннĕ.

Лабораторире авторсем театр артисчĕсемпе пĕрле пьесăсем вуларĕç, кашнине уйрăммăн сÿтсе яврĕç.

«Паян наци драматургийĕн йывăр лару-тăрура: вĕсен хаклакан та, сцена та çук. Чĕлхесĕр наци пурнăймасть, нацие культура пĕрлĕхĕ сыхланса юлаймасть. Ача тăван чĕлхене чи малтан çемьере вĕренет, унтан – театрта, кинора», – палăртрĕ Ирина Мягкова. 4 куна тăсăлнă лаборатори ĕçне ĕнер Чăваш наци музейĕнче «Глобализаци вăхăтĕнчи ача-пăча театрĕ» çавра сĕтелте» пĕтĕмлетрĕç.

**Мария РОМАНСКАЯ.**

# Кашни йăхăн – хăйĕн курайĕ

Ачасем темĕнпе те кăсăкланаççĕ. Кÿршĕре е тата хамăртан аяккарах пурăнакансем çинчен ытларах пĕлес килни хулари 17-мĕш вăтам шкулта вĕренекенсене Шупашкарти Ачасемпе çамрăксен библиотекине илсе çитернĕ. Кунта пушкăртсен йăли-йĕркипе çывăхрах паллашма май пулчĕ. Пушкăртстан пирĕншĕн уйрăмах çывăх, вăл вилĕмсĕр «Нарспи» çĕршывĕ пулнипе паллă. Пирĕн классикісем Константин Иванов тата Ухсай Яккăвĕ шăпах çав тăрăхра çуралса ÿснĕ.

Вĕренекенсем Чăваш Республикинчи Пушкăрт культурин центрĕн председателĕпе, геологи музейне пуçараканĕпе Нуриян Андрбаевпа тĕл пулчĕç. Нуриян Аюпович тахçантанпах Шупашкарта пурăнать. Хăй вăл Пушкăрт тăрăхĕнчи Ишимбай хулинче çуралса ÿснĕ. Пушкăрт халăхĕн историйĕпе культури, йăли-йĕрки çинчен тĕплĕн каласа кăтартрĕ вăл. Пушкăртстан пирки ÿкернĕ «Курай – Ташă» илемлĕ фильмпа паллаштарчĕ.

Курай – ту çинче ÿсекен çÿллĕ чечек. Çитĕнсе çитсен унăн тунинчен пушкăртсем тутапа вĕрсе каламалли курай /наци инструменчĕ/ ăсталаççĕ. Çинçе пăрăха аса илтерет вăл, флейта евĕрлĕрех. Пÿрнесемпе вылятса хитре сасă кăлармашкăн тăватă шăтăк çеç хăвараççĕ ун çинче. Сасси ĕлĕк-авалах французсене те тыткăна илни пирки юмах çÿрет Пушкăртра. Кашни йăхăн хăйĕн курайĕ пулнă. Наци çак инструменчĕ – йăла-йĕрке, культура символĕ шайĕнчех. «Пушкăртсен ташшине курайран уйăрма çук. Курай пур тăк – ташă та пур», – тет Нуриян Аюпович.

Ылтăн-пăхăрпа, газ-нефтьпе, кăмрăкминералпа кăна мар, хурт-хăмăрпа та пуян Пушкăрт çĕрĕ-шывĕ. Ахальтен мар вĕсен пылĕ чи сипли шутланать. Лаша юратакан пушкăртсем çулсерен кăмăс нумай туса илеççĕ. «Америкăри ирĕклĕх статуйине те пушкăрт пăхăрĕнчен ăсталанă. Эсир лайăх пĕлекен «Вечный зов», «Золотая речка», «Тени исчезают в полдень» фильмсене те ниçта та мар, Пушкăртстанра ÿкернĕ», – терĕ Нуриян Андрбаев.

Паянхи кун Пушкăртстанра 4 миллион ытла çын пурăнать. Вĕсенчен 1 миллион ытларахăшĕ çеç – пушкăртсем. 160 наци хушшинче чăвашсем те йышĕпе сахал мар. Пĕтĕмпе 117 пин çын ытла.

– Раççей пек пуян çĕр-шыв çук. Юратăр, упрăр ăна. Мĕн вăл Турци, Египет? Ав Камчаткăпа Байкала, Пушкăртстана кайса курăр, – вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне Чăваш Енри Пушкăрт культурин центрĕн председателĕ.

**Елена АТАМАНОВА.**

# Сĕтел айĕнче – тăвата хĕр...



23 çулта чухнех Ленин орденне, Социализм Ĕçĕн Геройĕн ятне тивĕçнĕ вăл. 1 гектар çĕртен 39 центнер тырă илме /норма 31 центнерпа танлашнă/ пултарнă. Сăмахăм 1924 çулта Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимеш ялĕнче çуралнă, халĕ Патăрьел районĕнчи Кĕçĕн Патăрьелĕнче пурăнакан Матрена Цветкова пирки.

Пилĕк пĕр тăванран паян Матрена Дмитриевнăпа йăмăкĕ пурăнаççĕ.

– 7 класс пĕтерсен 1940 çулта бригадир мана лаша уйăрса пачĕ, кÿлме вĕрентрĕ. Салтак арăмĕсемпе Канаша лавсемпе тырă леçме тытăнтăм. Каялла вутă тиесе килеттĕмĕр. Çавăн чухнех шăнса пăсăлнă ĕнтĕ шăмăсем, – тет кулянса Матрена Дмитриевна.

Вăрçă çулĕсем пуçлансан та çăмăл килмен. Ашшĕсĕр çитĕнменха вăл. Кил хуçи хăрах куçне туратпа тăрăнтарса амантнăран фронта кайман. Çапах вăрçă ахрăмĕ пурне те пырса тивнĕ. Шăллĕне 16 тултарсан 1943 çулта çара илеççĕ. Десантник 7 çултан çеç таврăнать.

– Куçĕ тÿрленсен атте конюхра ĕçлерĕ, анне – бригадăра. Колхоз валли çăвĕпе сÿс тыллатчĕ, хĕлĕпе михĕ çĕлетчĕ. Ачаллах ĕçе хăнăхнă эпир. Алă ывăççинчен кĕлте касаттăмăр. Аслисенчен пĕрре те юлман, – аса илет çăмăл мар кун-çулне Матрена аппа. Колхоз тунă чухне лашине те, ĕнине те хуçалăха пурлăхне куçарнине епле манăн?

Тулли лавпа Канаша çÿрекенскере 1941 çулта Сăр шывĕ хĕррипе окоп чавнă çĕре яраççĕ. Улатăр çывăхĕнче чÿк уйăхĕнчен пуçласа пуш уйăхĕччен пурăнать.

– Ун чухне арçынсем вăрçа кайса пĕтменччĕ-ха. Вĕсем тăпра муклашкисене лумпа кататчĕç, эпир тепĕр енне купалаттăмăр. Малтан хваттерте пурăнтăмăр. 21-ĕн янăччĕ пĕр киле. Выртма вырăн та çукчĕ. Пĕр сĕтел айĕнче 4 хĕр выртаттăмăр. Витре шăтăкчĕ тата. Сĕтел айне çĕрĕпе тумлатчĕ. Пĕррехинче питĕ шăннăран кăмака çине хăпартăм. Ая сарма нимĕн те çук. Пĕр фуфайкăсăр пуçне мĕн пултăр? Ытла пĕçерхĕрен кăмака çинчен сикрĕм. Салтак çинех аннă-мĕн. Эх, вăрçрĕ те вată салтак! – паян та Матрена Цветкова куçĕ умĕнчех иртнĕ кунсем.

Каярах çичĕ хĕр мунча ăшăтса выртма тытăннă. Çамрăккине хутма хăварнă. Çĕтĕк çăпатисене саплатарнă.

– Мунча çырма тĕпĕнче ларатчĕ. Сăртра масарччĕ – хăраттăм. Çамрăк вĕт-ха эпĕ. Окоп чавса килсенех Пăчăрлă Пашьелне вăрман касма кăларса ячĕç. Килте пĕр кун та пурăнайман, – сăмах çăмхи малаллах сÿтĕлет.

1942 çулхи ака уйăхĕн 1-мĕшĕнче маттурскере çамрăккине пăхмасăр бригадира лартаççĕ. Тăрăшать вăл. Çывăрма пĕлмесĕр ĕçлет. Вăйăа тухма та, улах ларма та ĕлкĕрет.

– 9 сехетре правленирен килеттĕм те ал ĕç йăтса улаха утаттăм. Вун иккĕ çитсен тăпаспа урпа çаптарма тухса каяттăм. Ăçта ыйхă туртма вăхăт? Пĕррехинче шăп улах юлашки ларнă каç председатель киле час ямарĕ – лару ирттерчĕ, – аса илет Матрена аппа.

1947 çул çамрăка, тăрăшулăхне кура, чаплă тухăçпа савăнтарать. Çавăнпах çулталăкран вăл пысăк хисепе тивĕçет. Пултаруллă та хастар Ĕç Геройĕ пирки «Ялав» журнал çырса кăтартать. Çакна Патăрьел каччи Иван асăрхать, маттур хĕре шыраса тупма тĕв тăвать. Чăн та, тăватă уйăх иртсенех Иван Дмитриевич Матрена Дмитриевнăна качча илет.

8 ачине кун çути парнеленĕ Цветковсем. Шел, паян 5-шĕ çеç пурăнать. 17 мăнукĕ, вĕсен 15 ачи çитĕнет.

– Тепĕр чухне шутлама тăратăп та аташсах каятăп. Хушсан-хушсан 32 кăларатăпах, – шÿтлеме те ăста 90 тултараканскер.

Ĕмĕрĕпех колхозра ĕçленĕ Матрена аппа. Тĕрлĕ хуçалăхра бригадирта тăрăшнă. 1975 çулта пенсие тухсан та килте ларман. Патăрьелĕнчи сад пахчинче ĕçлеме тытăннă. Çĕр чавнă, урал тунă, пан улми тирпейленĕ, хăмла пăхнă. Мăшăрĕ те ÿркенмен, малтан бухгалтерта тăрăшнă. 60 çула çитсен платникре çÿреме тытăннă. Çĕнĕр тăрăхĕнче те сахал мар пулнă. Иван Дмитриевич 1999 çулта вилнĕ. Пурăннă пулсан кăçал 100 çул тултаратчĕ вăл.

– Çынсене хисеплеме, пĕрпĕрне итлеме вĕрентĕм пире. Пурте килĕштеретпĕр, туслă пурăнатпăр. Ĕçрен пăрăнас, ÿркенес йăла та çук. Атте-анне ун пек вĕрентмен. Халĕ те: «Ăна турăр-и, кăна турăр-и?» – тесе тĕпчесех тăрать, – кун çути парнеленĕ çывăх çыннине мухтать ывăлĕ Валера.

Унăн хĕрĕ Виктория музыка шкулне çÿренĕ. Халĕ хулара вĕренекенскер акăлчанла тĕшмĕртет. Матрена Дмитриевна вара мăнукĕ хуларан килсенех хĕре хăйĕн патне чĕнет-мĕн. Ют чĕлхепе юрлама ыйтать. Темшĕн килĕшет ăна çак юрă-кĕвĕ. Ахальтен мар мăнукĕ валли туяннă синтезатор та асламăшĕн пÿлĕмĕнчех ларать.

**Татьяна НАУМОВА.**



САМАХ ПАРĂР-ХА

# Литература çулне... литературсăр

Маргарита ИЛЬИНА

"Хыпарăн" черетлĕ номерĕнче палланă çын сăн ÿкерчĕкне куртăм та, кăсăклă пулса кайрĕ – мĕнпе чапа тухнă-ха 10 çул шкул сукмакне пĕрле такăрлатнă тантăшăм? Ара, хаçатра пули-пулми çырмаççĕ вĕт – е лайăххипе палăрнисене мухтаççĕ, е начаррисĕн тиркеççĕ. Чăн та, пĕччен марччĕ-ха хайхи, ушкăнпаччĕ. Шел, лайăххи мар-мĕн... Çивĕч ыйту хускатнă Элĕк районĕнчи шкулсенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем – малашне ачасем тăван сăмах пуянлăхне эрнере пĕр е икĕ сехет кăна шĕкĕлчĕç. Сăлтавĕ, тавах турра, Элĕксем чăваш чĕлхине курайми пулса çитнипе мар, çĕршыври вĕренÿ тытăмĕнчи çĕнĕ стандартсемпе çыхăннă. Вулакана пĕлсе тăма: республикăри темиçе районти хăш-пĕр шкул 5 кунлăх вĕренÿ эрнине суйланă. Çавна май сехетсен шутне чакарма тивет. "Ытлашши сехетсем", федераци вĕренÿ планĕпе килĕшÿллĕн, регион компоненчĕсем кăна пулма пултараççĕ... Ку плана Элĕксем мар, республика та хирĕçлеме пултарайманнине палăртнă вĕренÿ вырăнти тытăмĕнчи чиновниксем.

Паян чăваш чĕлхин пуласлăхĕ пирки нумай калаçатпăр. ЮНЕСКО пĕтĕмлетĕвĕ те чан çапма хистет. Чĕлхе тата литература обществăна чăнласах витĕм кÿме пултарнине шута илсех-тĕр çитес вăхăтра ятарлă çулталăк ирттерме йышăнчĕç. Эпир вара, чăвашсем, вилĕмсĕр классика, "Нарспи" авторне Константин Иванова, халаллама палăртрăмăр черетлĕ 12 уйăха. /Ан тив, генисем паян Кĕçтенттин пултарулăхне хăть те мĕнле хак паччăр – рифмисем те çук-мĕн, Нарспийĕ те иккĕлентерет вĕсене, анчах та темшĕн çак критиксем хăйсем нумай-нумай чĕлхене куçармалли хайлавсемпе савăнтараймаççĕ/. Чĕлхе, сăмахлăх пĕлтерĕшне республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ăнланни, хисеплени шанăç кÿрет. Культура ыйтăвне ЧР Министрсен Кабинечĕн ларăвĕнче пайăррăн тишкереççĕ. Михаил Васильевич Константин Иванов çуралнăранпа 125 çул çитнине уявлама мĕнле хатĕрленнине куçран вĕçертмест. Çавна май ЧР культура министрне, классик хăйĕн вилĕмсĕр хайлавне çамрăклах çырнине шута илсе, унпа танлашма пултаракан яш-кĕрĕме палăртмашкăн хушнă-мĕн. Ыйту: паян, тăван чĕлхене пур енлĕн хĕснĕ май, Вадим Ефимов Пуçлăх хушăвне пурнăçлайĕ-и? Кун пек лару-тăрура çĕнĕ Ивановсем çуралма пултарĕç-и? Калăпăр, çÿлерех асăннă районтах? Элĕксен вĕт классик çуратма майсем çителĕклĕ. Ку район кашни ялтан тенĕ пек çыравçă тухнипе паллă. Республика гимнĕн авторĕ Илле Тукташ – Элĕкрен. "Салампи" авторне Александр Артемьева кам пĕлмест пулĕ? Тĕрĕссипе, Элĕк ен сăпкинче чăмпăлтатса пултарулăхне аталантарнă çыравçăсене асăнса пĕтерме те çук: Александр Галкин, Аркадий Лукин, Григорий Харлампьев, Прохор Емельянов, Аркадий Золотов, Владимир Ямаш... Анчах та çамрăксенчен камăн ячĕ-шывĕпе тăсмалла çак списока малалла? Район центрĕнче тахçанах вырăсла шăкăлтаттаракан çамрăксене аттеанне пилленĕ чĕлхерен паян патшалăх шайĕнчех пистерсе пыратпăр пулсан мĕн калаçмалли пур? Тăван чĕлхепе хайлакан çыравçăсен çемйине лексе республика, çĕр-шыв, тĕнче историйĕнче йĕр хăварасси пирки вара ĕмĕтленмелли те çук.

Пĕр шухăшласан, кăсăклă пулса тухать. Сылтăм алă мĕн ĕçленине сулахайăн пĕлмест темелле-ши кун пек чухне? Раççей шайĕпе Литература çулталăкне паллă тума хатĕрленнĕ вăхăтра эпир шăпах чĕлхе, литература сехечĕсене катăртсе ларатпăр. Вăйлă хатĕрленетпĕр, çапла мар-и? Куншăн эпир мар, Мускав айăплă тесшĕн-и? Халăхшăн пулсан Мускав – аякра, хамăрăн министерствăсем вара – çывăхра. Çынсен шухăш-кăмăлне, регион хăйне евĕрлĕхне шăпах яваплă ведомствосен ертÿçисен çĕр-шыв шайĕпе çĕклесе Мускава çитермелле мар-и вара? Е пирĕн министерствăсем ывăн тыттармашкăн кăна кирлĕ-и пире? Калăпăр, Комсомольски тăрăхĕнче пĕр вĕрентекен Раççейĕпех "чапа" тухрĕ. Пĕлместĕп, тĕрĕссипе мĕн пулса иртнĕ унта? МИХсем вĕрентекен айăпне йышăнманнине тĕнче илтмелле пĕлтерчĕç. Апла тăк лару-тăру иккĕленÿллĕ. Вĕрентекен тĕлĕшпе следстви пуçарнă. Тăван министерство çеç специалистсем ĕç вĕçне пăнчă лартасса кĕтсе тăмарĕ, вердиктне тÿрех палăртрĕ: айăплă! Чăннипе вара айăплă мар тăк хÿтĕлес шухăш камăн пуçĕнче те пулин çуралчĕ-ши?

Вăт çак ĕç-пуç хыççăн иккĕленÿ татах та вăйланчĕ кăна. Тăван чăваш чĕлхине хÿтĕлеме вăй çитерĕç-ши чиновниксем? Е Мускавран килекен пур хушăва та пуçа чиксе пурнăçлама хыпаланĕç-ши? Тепĕр тесен, унта та – Раççей шайĕпе – çынсемех ĕçлеççĕ. Вĕсем те йăнăшма пултараççĕ. Çак йăнăша вăхăтра тÿрлетсен аван пулмалла. Анчах та хăюллă чăваш тупăнĕ-ши? Паянхи чăваш çĕрĕ çĕнĕ Çеçпĕл, Иванов, Хусанкай çуратма пултарать-и? Тайма пуçа хĕç витмест теççĕ те, темĕн, пуçа тайсах пĕтсе пыратпăр пулас... Чăваш чĕлхи çĕр çинчен çухалсан, паллă ĕнтĕ, халăхĕ те пулмĕ. Пĕлес килет – пирĕн чиновниксем ун чухне камăн интересĕсене хÿтĕлĕç-ши? Тутарăнне-ши е çармăсăнне-ши? Е ăшатса çитернĕ пукан темрен те хаклă-рах-ши?

ÇУЛ-ЙĔР

# Тÿрĕ те, тикĕс те...



Юпа уйăхĕн 23-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата Федераци çул-йĕр агентствин ертÿçи Роман Старовойт Муркаш районĕнчи Москакасси çывăхĕнчи «Атăл» Мускав – Владимир – Чул хула – Хусан – Ĕпхÿ» Чăваш Республикинче» М-7 автомобиль çул-йĕрне чаплă лару-тăрура уçнă çĕре хутшăннă. Çавăн пекех унта Чăваш Ен транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министрĕ Владимир Филиппов та пулнă.

Республика Пуçлăхĕ хăйĕн сăмахĕнче юлашки çулсенче федераци магистралĕсене сарма тата çул-йĕре юсаса çĕнетме Чăваш Ене чылай укçа-тенкĕ уйăрнине палăртнă.

Михаил Игнатьев журналистсен ыйтăвĕсене хуравланă май республикăри ялсем витĕр тухакан М-7 тата А-151 федераци трассисен лаптăкĕсене çутăпа тивĕçтернине палăртнă. Унсăр пуçне ку магистраль лаптăкĕ çинчи çул урлă каçмалли мĕн пур вырăн трассa айĕпе е çийĕпе вырнаçнă. Çакă, паллах, талăкăн кирек хăш вăхăтĕнче те çул урлă лăпкăн, шикленмесĕрех каçма май парать, çавăн пекех аварисен шутне чакарать.

Роман Старовойт палăртнă тăрăх, Росавтодорăн тата Раççей транспорт министерствин Чăваш Республикин ертÿçисемпе тачă тата пĕр-пĕрне пулăшас çыхăнусем йĕркеленнĕ. 2014 çулта республикăна федераци бюджетĕнчен 4 млрд. 200 млн. тенкĕ уйăрнă, çитес çул валли 4 млрд. 400 млн. тенкĕ пăхса хунă.

Елена БАШКИРОВА.

ВĔРЕНÿ

# Чăваш ачисем – Патшалăх Думинче

Алена Аршинова депутат йыхравланипе Шупашкарти 14-мĕш кадет шкулĕн вĕренекенĕсем РФ Патшалăх Думине çитсе курнă. Полици класĕнче пĕлÿ пухакан хĕрсемпе каччăсем РФ Патшалăх Думин керменĕнче курса çÿренĕ, çĕр-шыв парламенчĕн кун-çулĕпе кăсăкланнă, фракцисен тата халăх «тарçисен» ĕçĕ-хĕлĕпе паллашнă. Çамрăксем Алена Игоревнăпа тĕл пулнă май çитĕнекен ăрăва хумхантаракан тĕрлĕ ыйтăва хускатнă, хăйсен шухăшĕсене пĕлтернĕ. Алена Аршинова депутат паянхи ачасем ăслă та хастар, пултаруллă пулнине, вĕсене халех пысăк ĕç шанса пама май пурри палăртнă. Çамрăк кадетсем хăйсен çул çÿревĕпе кăмăллă юлнă.

Елена ГЛУХОВА.

ПУЛĂШУ

# Çамрăк амăшĕсене



И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ аслă шкула вĕренме кĕме ĕмĕтленекен çамрăк амăшĕсене пулăшасшăн. Çавна май ППЭне хатĕрленмелли тÿлевсĕр курссене чĕнет. Унта 23 çултан аслă мар хĕрарăмсене йышăнаççĕ. Амăшĕсене 2 пин тенкĕ стипенди тÿлесе вĕрентеççĕ. Заявленисене чÿк уйăхĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Кун пирки 8/8352/ 58-18-40 телефон номерĕпе шăнкăравласа ыйтса пĕлме пулать.

Çакнашкал курссем йĕркелени – амăшĕсемшĕн пысăк пулăшу. Ку республикăри демографи лару-тăрăвне лайăхлатма, çавăн пекех аслă шкула вĕренме кайма май парать.

Елена МИХАЙЛОВА.

УЛШĂНУ

# Сехет куçараççĕ

Вырсарни кун, юпа уйăхĕн 26-мĕшĕнче, Раççейри чылай регионта çĕрле 2-ре 1 сехет каярах куçарĕç. Кун хыççăн вăхăта текех улăштармĕç.

Психологсем каланă тăрăх, сехет йĕппине çулталăкне икĕ хутчен куçарнипе чылай çын стресспа аптăранă. Уйрăмах – пысăк хуласенче. Психотерапевтсем «хĕллехи вăхăт» психологи тĕлĕшĕнчен çын сывлăхне лайăх витĕм кÿни пирки калаççĕ. Çынсен раштав уйăхĕнче ĕçе, шкула, ача садне тĕттĕмре виçĕ эрне çеç çÿреме тивĕ, кун хыççăн тулта часах çутăлма тытăнĕ.

Хисеплĕ вулакансем, ыран сехет йĕппине куçарма ан манăр.

Елена МИХАЙЛОВА.



*ÇУТ ÇАНТАЛĂК ПУЛĂМĔ*

# Инкек тĕрĕслеве çаврăнчĕ

**Иртнĕ эрне вĕçĕнче Чăваш Ене халĕччен пулман инкек пырса çапрĕ. Юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнче пăрлă çумăр тата йĕпе юр çунăран çут çанталăк та, халăх та пысăк инкек тўсрĕ. Республикăра чрезвычайлă лару-тăру пĕлтерчĕç. Республикăн çурçĕр енчи районĕсем уйрăмах шар курчĕç. Темиçе çул ўссе капмарланнă йывăççен пăрланнă турачĕсем йăтаймасăр хуçăла-хуçăла анчĕç. Малтанлăха палăртнă тăрăх çеç Чăваш Ен вăрман фондĕнче 4,6 пин кубла метр йывăç пĕтнĕ. Сиен виçи 4,83 млн тенкĕпе танлашать. Электричество пралукĕсем те татăлчĕç, вырăн-вырăнпа юпасем те ўкрĕç. Шупашкар хулипе районĕ, Муркаш, Етĕрне, Элĕк, Вăрнар, Красноармейски, Çĕрпў, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Çĕмĕрле тата Хĕрлĕ Чутай районĕсем çутăсăр юлчĕç. Оперативлă штабсем, ĕç бригадисем йĕркелесе инкеке çийĕнчех сирме пуçларĕç пулин те тунти кун ирхине республикăра 235 ял-поселени /вĕсенче 15738 кил, 37 пине яхăн çын пурăнать/ çутăсăрччĕ-ха. Юсав ĕçĕсене çĕрĕн-кунĕн пурнăçлаççĕ. Раççей МЧСĕн Чăваш Енри тĕп управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер ирхи ултă сехет тĕлне Муркаш районĕнчи Хорнуй ялĕ çеç çутăсăрччĕ. Унта 766 çын пурăнать.**

**Чăваш гидрометеорологи** центрĕн пай пуçлăхĕ Марина Китарьева синкере çапла ăнлантарать: «Юпа уйăхĕнче республикăра çумăр çусах тăчĕ, çавна май çĕр шўсе кайрĕ. Пралуксем, йывăççем йĕпенсе тăчĕç, типме пĕлмерĕç. Юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнче атмосферăра ăшă сывлăш хуçаланчĕ. Çĕр çинче вара ун айĕпе сивĕ варкăш «юхрĕ». Çавна май температура ирех чакма тытăнчĕ. Ахаль те нўрĕ пралуксем, йывăççем пăрпа витĕнчĕç. Çумăр çунă май унăн сийĕ хулăнланса пычĕ».

Тĕп хулара çак сăлтавпах троллейбуссем те çўреймерĕç. Пăртан тасатнă пралуксем çийĕнчех çĕнĕ сийпе витĕнчĕç.

Çутăсăр-ăшăсăр юлнă çĕр пине яхăн çын йышĕнче малтанхи кун 53 шкулпа 23 ача сачĕ те пурччĕ /ку цифрăна Чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен комиссин тата оперативлă штабăн ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ертсе пынă ларăвĕнче, юпа уйăхĕн 19-мĕшĕнче, пĕлтернĕ/. Юпа уйăхĕн 21-мĕшĕнчен пуçласа республикăри 3500 ачашăн вăхăтсăр каникул пуçланнăччĕ.

Ĕнерхи кун тĕлне ача сачĕсемпе шкулсенче электроэнерги парассине пĕтĕмĕшле çĕнетнĕ. Муркаш районĕнчи Сосновка ялĕнчи 57 ачашăн çеç ăшă çителĕклĕ виçене çитейменнишĕн каникул тăсăлнăччĕ. Тунти кун вĕсем те парта хушшине вырнаçĕç.

Пралуксем татăлнипе çутăсăр юлнă объектсен йышĕнче 40 ферма та пурччĕ. Пĕчĕкрех хисенче ĕнесене алăпах сунă. Пысăк комплекссенче пĕр-икĕ талăк сăвайман.

Инкеке май пур таран хăвăртрах сирме республика тулашĕнчи энергетиксем те килсе çитнĕ. Сарă ту, Чĕмпĕр, Самар, Пенза, Эрĕнпур, Чул хула, Владимир облаçĕсенчи тата Мордови республикинчи çăлавçăсем электричество тўннĕ юписемпе пралуксене йĕркене кĕртме пулăшнă. Вĕсене пурăнмалли кĕтеспе, вĕри апатпа тивĕçтернĕ.

Çак кун çул-йĕр пăрланнăран аварисен шучĕ те пысăк пулчĕ темелле. Юпа уйăхĕн 17-мĕшĕнче кăна 107 авари пулнă. Çын вилнĕ тĕслĕх те пур. Улттăн аманнă. Унсăр пуçне йывăççем ўкнĕрен Шупашкарта 22 автомобиль лапчăннă. Юпа уйăхĕн 17-19-мĕшĕсенче республикăри çулсем çинче пурĕ 211 инкек сиксе тухнă. Вĕсенче 17 çын аманнă, иккĕн вилнĕ.

Çут çанталăкăн иртнĕ канмалли кунсенче килсе çапăннă синкерĕ республикăн кăнтăр районĕсене пырса тивмерĕ.

Сивĕ çумăр хыççăнхи инкеке сирме ĕлкĕреймерĕмĕр, республикăра чарăнмасăр юр вĕçтерме пуçларĕ. Чăн-чăн хĕл çитрĕ. Юпа уйăхĕн 22-мĕшĕнче çеç республикăри çулсене юртан тасатма 322 техника единици ĕçлерĕ.

Электропередача линийĕсем татăлнипе **ял хуçалăх** организацийĕсенче 40 ферма çутăсăр юлнă. Ĕнесене пысăк комплекссенче пĕр-икĕ талăк сăваймасăр тăратнă тĕслĕхсем те пулнă. Энергетиксем фермăсенче дизель-генератор хута ярса ĕçе йĕркеленĕ. Çут çанталăк инкекĕ хуçалăхсене пысăк тăкак кăтартнă. Çак тапхăрта сĕт суса илесси палăрмаллах чакнă.

Юпа уйăхĕн 24-мĕшĕ тĕлне фермăсене çутă çитернĕ. Халĕ малтанхи пекех ĕçлеççĕ, ĕнесене вăхăтра сăваççĕ.

– Лару-тăру йĕркеллех темелле. Хĕл каçакан калча уйхирте ытлашшиех сиенленмен, тымарĕсем çирĕп. Пăрлă çумăрпа йĕпе юр уйрăм çынсен пахчисенчи улма-çырла йывăçĕсене самаях сиен кўчĕ. Пăрланса ларнă туратсем шатăрах хуçăлса анчĕç. Аманнă туратсене çанталăк пăртак ăшăтсанах касма тивет, – терĕ ЧР ял хуçалăх министерствин пай пуçлăхĕ Владимир Васильев.

«Атăл çинчи МРСК» АУОн **«Чăвашэнерго»** филиалĕ республикăри кашни подстанцие сăнаса тăрать. Юпа уйăхĕн 24-мĕшĕнчи ирхи 7 сехет тĕлне республикăри синкер курнă районсенче лару-тăру йĕркеленнĕ, пурне те электроэнергипе тивĕçтернĕ. Энергетиксем çак кун тĕлне Муркаш районĕнчи пĕртен пĕр ял кăна çутăсăр пулни, анчах та эрне кун ĕçе вĕçне çитересси пирки пĕлтерчĕç.

**Сывлăх сыхлавĕ** тытăмĕнчен ĕнерхи 8 сехет те 30 минут тĕлне пĕлтернĕ тăрăх, Муркаш районĕнчи шар курнă ФАПсене çутăпа тивĕçтерме май килнĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнче кăна кулленхи ĕç йĕркеленсе çитеймен. Унта икĕ ФАПра – çутă, вĕсенчен пĕринче ăшă çук.

**Культура тытăмĕнче** ĕнерхи 12 сехет тĕлне çакнашкал пĕтĕмлетў тунă: республикăри культура учрежденийĕнче çутă та, ăшă та пур. Унта çирĕпленнĕ йĕркепе ĕçлеççĕ.

**Марина ТУМАЛАНОВА,**
**Татьяна НАУМОВА,**
**Елена ГЛУХОВА.**





Рита АРТИ, Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ўкерчĕкĕсем.

*ВЫРĂНТАН ПĔЛТЕРЕÇÇĔ*

## МУРКАШ РАЙОНĔ

*Çут çанталăк синкерĕ республикăри 12 муниципалитет йĕркеленĕвĕнче пулнă, анчах Муркашсем ытларах шар курнă. Ку тăрăхра малтанхи вăхăтра Шетмĕпуç тата Çатракасси ял тăрăхĕсенче кăна пысăк вольтлă линисен 6 юпи тўннĕ. Каярахпа, пралуксем çинчи пăр хулăнланса пынă май, вĕсен шучĕ 11 хут ытла ўснĕ. Ку чылай яла, вĕсенчи социаллă обьектсене, вĕренў учрежденийĕсене тата пысăкрах йывăрлăха кĕртсе ўкернĕ.*

*Виçĕм кун Шетмĕпуç ял тăрăхĕпе çыхăнтăмăр.*

*– Ял çыннисем питĕ савăнăçлă. Юн кун каçхине пире çутăпа тивĕçтерчĕç. Пирĕн тăрăхри 8 ялта сўннĕччĕ вăл. Пилĕк талăк çурта çутипех пурăнтăмăр. Аякран килнĕ бригадăсем тăрăшса ĕçлерĕç, ял çыннисем те айккинче юлмарĕç, йывăççене татса тирпейлерĕç, пралуксене пăртан тасатрĕç. Çутăсăр кăна мар, ăшăсăр тăрса юлакансем те пулчĕç ялта. Çавна май хутса ăшăтмалли генераторсем туянчĕç. 5-6 пин тенкĕ тăраканнисене 20-40 пин тенкĕ таранах ўстерсе ячĕç çак ик-виç кун хушшинче. Шел, çын хуйхипе укçа тăвакансем те пур, – терĕ ял тăрăхĕн специалист-эксперчĕ Галина Яковлева.*

*Çутă çук тесе аптрасах ўкмен ял халăхĕ. Сивĕтмĕшсемпе шăнтмăшсене чарса апат-çимĕçе сивĕ çĕре кăларса хунă. Интернетпа çыхăнма, телевизор курма май çуккишĕн те ытлашши пăшăрханман.*

*– Ĕлĕк çурта, хăйă çутипех пурăннă. Çĕрĕпех тĕрленĕ, пир тĕртнĕ. Эпир те вăхăта ахаль ирттермерĕмĕр, компьютера пула манса кайнă вăйăсене çĕнĕрен аса илтĕмĕр, шашка-шахмат, домино вылярăмăр. Ал ĕç те турăмăр, вăхăта мĕнле те пулин ирттермелле-çке, – терĕ Галина Демьяновна.*

*Йывăрăша чăтайманнипе çурăла-çурăла аннă улма йывăççисем Шетмĕпуçĕнчи кашни хуçалăхрах пур. Ял паркĕнчи тирексемпе хурăнсен, йăмрасен тăррисем хуçăлнă. "Ачасем виçĕ кун каннă хушăра учительсем шкул çумĕнчи лаптăка йăлтах тасатрĕç, эпир те çак кунсенче субботнике тухатпăр", – пĕлтерчĕç ял тăрăхĕнче ĕçлекенсем.*

*– Чи кирли – халăх йывăрлăха парăнманни, ăна хăвăртрах пĕтерме пире пур енлĕн пулăшни, – терĕ Галина Яковлева.*

## ШУПАШКАР РАЙОНĔ

*– Икĕ кун çеç çутăсăр лартăмăр. Халь çăтмахри пекех пурăнатпăр. Пирĕн патра йăлтах йĕркеллĕ. Апаш ял тăрăхĕнче ĕçлекенсем тата вырăнти хуçалăх ертўçи чылай тăрăшнипе йывăрлăхран хăвăрт тухрăмăр. Кунашкаллине урăх курас марччĕ. Ял халăхĕ йывăрлăха парăнмарĕ, ăна хăвăртрах пĕтерме тăрăшрĕ, – терĕ Шупашкар районĕнчи Шăнкас ял тăрăхĕн депутачĕ Василий Егоров.*

*Хĕл ларас умĕн пăрлă çумăр та, йĕпе юр та çуни пулнă, анчах та çут çанталăк пĕр кĕтмен çĕртен çакнашкал хăрушлăх кăларса тăратнине Шăнкасри ватăсем те ас тумаççĕ ял тăрăхĕнче.*

*Ял халăхĕ улма-çырлапа пахча çимĕçе пуçтарса кĕртме ĕлкĕрнĕ. Йывăç-курăка хуçса пĕтерни шел паллах. Тепĕр çул çимĕç кĕтсе илейĕпĕр-и-ха? Хальлĕхе йывăрăша чăтайманнипе тўннĕ хурăнсемпе йăмрасене пуçтармалла, таврана тирпей-илем кĕртмелле. Çуркунне йывăççем ытларах лартсан аван.*

**Елена АТАМАНОВА.**



● САДРА.

# Океан хĕрринче

## канас тенĕччĕ пĕррехинче...

**Мароккона çитсе Марракеш хулинче курса çӳремесен çак çĕр-шывра пулнă пек те туйăнмасть. Тĕп хула – Рабат. Экономика тĕп хули – Касабланка. Тĕрĕссипе, чи çитсе курас килнĕ хула, паллах, Фес. Марокко аваллăхĕ шăпах унта упранать. Анчах та туристсене ытларах Агадир йышăнать, унтан вара Фес питĕ аякра. Шел, "Клон" фильма ӳкернĕ тăрăхпа, Джади утса-чупса çӳренĕ тавралăхпа киленеймерĕмĕр. Унсăр пуçне, араб ялĕсенче пулса курас кăмăл пысăкчĕ. Анчах та сĕкĕнсе пăх-ха унта хăвăн кĕске юбкупа, каялла тухса пĕтиччен ятна та манса кайăн. Юрĕ, мăсăльман çĕр ĕçченĕсемпе тепĕр чух çывăхрах паллашăпăр. Хальлĕхе вара пасар таврашне çитсе курар.**

### Бахия керменĕ

Марракеш... Вăл, çĕр-шыва ят панăскер, Марокко чĕри шутланать. Кунта халĕ те кавир самолетпа вĕçнĕн, арçынсем шĕвĕр те вăрăм пуçлă пушмакпа – çӳренĕн туйăнать. Хальхаль çурт кĕтесĕнчен куçĕсене кăна хăварса пичĕсене хупласа çыхнă юлан утçăсем вĕçтерсе тухас пек. Телее, ку – пирĕн шухăш вылявĕ кăна. Чăн та, ăна вылямашкăн майĕ çителĕклĕ. Акă Бахия керменĕ. "Чиперкке керменне" – çапла куçать чăвашла унăн ячĕ – XIX ĕмĕрте Марракеш аслă визирĕ Си Ахмед бен Мусса аслă арăмĕ, юратнă хĕрарăм, валли çĕкленĕ. Сăмах май, визирĕн 4 арăм тата 25 наложница пулнă. Урамран пăхсан ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман çуртра шалта – юмахри пек. Стенасем, кедртан тунă мачча, мрамор шыв сикки – йăлт тухăç эрешĕпе витĕннĕ. Çурта Фес хулинчен килнĕ 1000 çын çĕкленĕ. Керменте – 150 пӳлĕм. Пуянсен темиçе ĕмĕр каяллахи пурнăçĕ куç умне тухса тăрать. Мĕн кăна пулса иртмен-тĕр кунта... Пĕр шухăшласан, гарем хĕрарăмĕсене те шеллемелле, те ăмсанмалла вĕсене – хитре тумланнă, тутлă çинĕ, чаплă керменте пурăннă, ниçта та ĕçлемен... Визирь вилсен кермене ӳссе çитнĕ Абдель Азиз султан туртса илсе çаратнă. Бахия керменĕ – Марракеш чи паллă вырăнĕ. 60-мĕш çулсенче кунта Жаклин Кеннеди каннă.

### Кутубия мечĕтĕ

Бахия керменĕнчен инçех мар Кутубия мечĕтĕ вырнаçнă. Марракешра вăл тĕп мечĕт кăна мар, çĕтсе кайнă туристсемшĕн – тĕп ориентир та: уяр çанталăкра 30 çухрăмран та курăнать теççĕ. Мечĕте 1147 çулта Альмохадсен йăхĕн ертӳçи Абд аль-Му-мин хушнипе çĕклеме пуçланă. Ĕççем питĕ хăвăрт пынă. Вĕçлес тенĕ чух кăна асăрханă пысăк йăнăша – мечĕт михрабĕ Мекка еннелле тĕрĕс мар вырнаçнă! Архитекторсен, паллах, кун-çулĕ вĕçленнĕ. Султан йăлт тĕпрен аркатма хушнă. Кермене çĕнĕрен çĕклеме пуçланă. 15 çултан çеç пăнчă лартма май килнĕ – ĕçе султан мăнукĕ Якуб аль-Мансур вĕçленĕ.

### Пуç каснисен лапамĕ

Унран инçех мар Джем-аль-Фна лапамĕ вырнаçнă. Ăна ЮНЕСКО Этемлĕхĕн чун еткерлĕхĕн списокне кĕртнĕ.. Çӳлерех асăннă мечĕте шăп хирĕç вырнаçнăскерте ĕлĕк султана пăхăнманнисен, пăлханакансен, патшалăха хирĕçле ĕç тăвакансен, вăрăсен, çын вĕлеренсен пуçĕсене касса еврейсене тăварлама панă. Кайран вĕсене шалчасем çине тăрăнтарса лапама вырнаçтарнă – ыттисем курччăр та хăраччăр. Лапам ячĕ те чăвашла Вилнисен пухăвĕ-пуç каснисен лапамĕ тесе куçать... Кунта пин çул ĕнтĕ пурнăç кĕрлет. Авалрах чун тухнă вырăнта халĕ шыв сутакансем шăнкăравĕсемпе чăнкăртаттарса утаççĕ /вĕсем шыв сутни иккĕлентерет паллах – ытларах туристсемпе сăн ӳкерĕнсе укçа тăваççĕ/. Факир çĕлене куç пăвать. Кунтах çунакан факелсемпе выляççĕ. Акробатсем, юмăç яракансем, сиплĕ япала сутакансем, ташăççсем... Пурте вĕсем – "ĕçлеççĕ"... Вĕсене /вĕсене кăна мар, ыттисене те/ сăн ӳкерес тетĕр пулсан ас тăвăр – çакăншăн укçа тӳлемелле. Тата çакна ан манăр – мĕн чухлĕ тӳлессине малтан палăртăр кăна мар, тӳлесе хурăр. Унсăрăн сирĕнтен калаçса татăлнинчен самай нумайрах ыйтма пултарĕç, 5 дирхам шантарнă тăк 30 ыйтма пултараççĕ. Памасассăн темиçе квартал хăпмасăр-юлмасăр пĕрле пыраççĕ. Ан манăр: арабсем еврейсем пекех чее те сĕмсĕр суту-илӳре, ку енĕпе вĕсене çитекенни тĕнчипе те урăх çук. Лапамра апельсин сĕткенĕ сутаççĕ, ăна сирĕн умрах кăлараççĕ. Гид унăн пахалăхĕ енĕпе иккĕленмелле маррине палăртрĕ те ăш хыпнăскерсем тӳрех çавăнталла çул тытрăмăр – ара, урамра çапах та 30 градус ытла шăрăх. Тăвата çынна пĕрер стакан тултарса панă хыççăн каялла укçа парса çитерменнине асăрхарăмăр /ку вăхăталла дирхам-доллар-тенкĕ çаврăнăшне хăнăхса çитнĕччĕ ĕнтĕ/. Çамрăк арабсем акăлчанла лайăх пĕлеççĕ. Манăн та нумай-нумай çул каялла вĕреннинчен темĕн çакланса юлнă пуç миминче. "You bad boy /эсир лайăх мар каччă/!" – терĕм сутуçа. Аванмарланать тата, шельмă! Юнашар тăракан каччăна темĕн каларĕ, парса çитермен укçана пире тыттарчĕ те пăрăнса утрĕ. Лешĕ вара пире кашнине тата çуршар стакан сĕткен ярса пачĕ – укçасăрах... /Эх, пирĕн пасартаччĕ çакăн пек – улталасан тата хушса парсанччĕ!/.

### Пасар. Сук

Лапам сисмесĕрех пасарпа пĕрлешсе каять. Тухăç пасарĕ... Сук. Мĕн чухлĕ ĕмĕтленмен пулĕ унта пулса курма! Арабсем çакăнтах пурăнаççĕ тейĕн. Пасар урамĕ питĕ хĕсĕк, машинĕ, мотоциклĕ, çуран çӳрекен хĕвĕшет унта. Ирпе тата кăнтăрла лăпкă, халăх каçалапа, шăрăх чаксан, тапса тухать. Пĕтĕм Марракеш урамра тейĕн... Сутуçăсем çыпăçмаççĕ, лăпкăн кăна пăхса ирттерсе яраççĕ. Чарăнсан вара мĕн те пулин туянтараççех. Çавăнпа та туянас темесен тӳрех иртсе кайăр. Япала кирлĕ тĕк сутуçă ыйтнă хакпа туянма ан васкăр. Каларăм ĕнтĕ, арабсен суту-илӳ – юнра. Туристсенчен вĕсем 5-7 хут хаклăрах ыйтаççĕ. Çавăнпа та тавлашăр, сутлашăр – кунта йĕркеллĕ шутланать ку. Тавлашмасăрах туянсан сутуçă... кăмăлсăр юлать. Унăн шухăшĕпе, эсир укçăра тар юхтарса илмен, çавăнпа çăмăллăнах тăкаклатăр. Эпир, сăмахран, арçыннăн çуллахи пушмакне пăхрăмăр. "Бабуши" текенскер, сăранран тунăскер çăп-çăмăл. Отель çумĕнчи лавккасенче уншăн 350 дирхам ыйтаççĕ. Эпир тавлаша-тавлаша 60-а çитертĕмĕр. Çапах та туянма васкамарăмăр-ха. Тепĕр вырăнта... 50 дирхампа пачĕç – пирĕнле 200 тенке яхăн. Сутуçă ăнлантарнă тăрăх, ку – вырăнтисене сутмалли хак. Ара, ку пӳлĕмре çӳремелли çемçе тапăчки хакĕ кăна вĕт! Сăранран çĕленĕ япаласене тĕлĕнмелле йӳнĕ хакпа туянма пулать. Çакна сиссен куртка-плащ таврашне суйлама пуçларăмăр. Кашни утăмрах – лавкка. Килĕшекенни тупăнмасан тĕсне, размерне, модельне кăна суйла – пĕр кунрах çĕлесе параççĕ. Сăранĕ мĕн тĕсли кăна çук! Хайхи япаласене те кунтинчен 4-5 хут йӳнĕрех туянма май килчĕ. Анчах та арабсем питĕ аван пурăнаççĕ тесе ан шухăшлăр. Пур тавар та йӳнĕ мар. Бензин, калăпăр, литрĕ – 1 евро.

### Мажорель сачĕ

Марракеша пĕр кунра курма майĕ çук. Çапах та Мажорель садне çитмех палăртрăмăр. Марракеш оазисĕпе пĕрех вăл. 1886 çулта Францире çуралнă Жак Мажорель художник Марракеша килнĕ. Кунта çĕр туянса сад пуçарнă. Халĕ кунта тĕнче тĕрлĕ кĕтесĕнчи 300 ытла ӳсен-тăран, хăшĕ-пĕри – сайра тĕл пулаканни. 1964 çулта сада Ив Сен-Лоран туяннă. Унăн кĕлеткин юлашкине те кунтах пытарнă.

### Тухăç юмахĕ

Тухăç асамлă юмахĕ пире кăна мар, влаç çыннисене те илĕртет. Юлашки çулсенче çăлтăрсем туйсене çăтмаха аса илтерекен вырăнсенче ирттерме пуçларĕç. Марракеш хулипе паллаштаракан гидсен халĕ тĕлĕнмелле козырь пур – вĕсем ăмăртса тенĕ пек Раççей Президенчĕн хушаматне аса илеççĕ. Ахальтен мар – Владимир Владимирович хĕрне шăпах Марракешра качча парса туй кĕрлеттернĕ-мĕн. Çак хушамата халĕ гидсем кăна мар, пасарти кашни сутуçă калама вĕренсе çитнĕ. Эпир Раççей турисчĕсем пулнине пĕлсенех вĕсен тути йăл кулать: "А-а, Russia? Путин? Карашо-о!" Эпир иртсе кайсан çурăм хыçĕнче мĕн тăваççĕ-ши – калаймастăп, çаврăнса пăхман. Раççее тĕнче тĕрлĕрен йышăнать вĕт: пĕри – тус пек, иккĕмĕшĕ – тăшман пек, пĕри – юратса, тепри – хăраса...

### Катастрофа – not

Агадирта муниципалитет пляжĕ кăна. Çыран хĕрринче те, шывра та вырăнти донжуансем чуна илеççĕ: ăçта пăхатăн – вĕсем шăтарасла сăнанине асăрхатăн. Лăпкăн выртма та майĕ çук. "Винивинии!" – минут пуçне кăшкăрать пончик сутакан. Çимĕçне нимĕнпе те витмен хăй. Хăйăр çилпе вара вĕçет кăна. Хайхискер пăрăнса ĕлкĕреймест: "One dollar! One dollar!" – илтĕнсе каять вак-тĕвеке пĕр долларпа сутаканăн сасси. Япалисем пасарта туристсене сĕнекен хаксенчен темиçе хут пысăкрах. Тулли кĕлеткеллĕ вырăс майри укçа çуккине калать. Тĕрĕсех, сутмалли япалисене мăйран çакса çӳреççĕ те – туянма мар, тытса пăхма та, çемçен каласан, кăмăллă мар. Туристăн укçа çуккине "катастрофа" ăнлавпа палăртать сутуçă араб. "Катастрофа?! – пăхать хайхи самăр майра çине. Унтан хăйĕн хырăмне силлесе тачка хĕрарăм енне пӳрнипе тĕллет: – Not катастрофа!" "Çиме укçу пур, япала туянма – çук!" – тесшĕн ĕнтĕ хайхи. Эпĕ чăтаймасăр ахăлтатсах кулса янине илтсен ман енне çаврăнать те иксĕмĕр пĕр тапхăр шăл йĕретпĕр. Унтан хайхи ман çывăха пырать. Эпĕ, хăнăхнă йăлапа, тӳрех чи пĕчĕк хака палăртатăп. "Мадам, эсир ашак хакĕпе слон туянасшăн, – хăтăрать араб. – Саботаж, саботаж..." – утать хайхи айккинелле сăмси айĕнче мăкăртатса. Эпĕ татах кулатăп... Мана хаваслă... Хама мĕн кирлине пасарта туяннă эпĕ. Араби? Мана кăтартнă тутăра çавăнтах поляксене ярăнтарать вăл. Чăн та, лешсем тавлашма пăхрĕç-ха малтанах. Хака чакарма килĕшменнине пĕлсен çаврăнса утма тăчĕç те араб парăннă пек пулчĕ, йӳнĕрех хакпа сĕнчĕ. Эх, хĕпĕртерĕç лешсем: ара, йӳнĕпе туяннă шутлă пулчĕ-çке. Эх, хăйăр çинче хĕртĕнме пуçличчен пасар урлă та пирлĕ çӳрени чухах пулчĕ – унти хаксене лайăх пĕлетĕп-çке: поляксене чике тăршшĕ лартрĕ вĕт араб...

**Кашни утăмрах тенĕ пек сăн ӳкертĕмĕр. Анчах хаçат страници виçеллĕ. Тема тăсăмĕпе кăсăкланакансене "Одноклассники" социаллă сетьре "Чăваш хĕрарăмĕ" ушкăнпа туслашма сĕнетпĕр – страницăсене вырнаçманни йăлтах унта пулĕ.**

Тухăçра пĕрремĕш хут кăна мар ĕнтĕ. Пуш хирте тĕвесемпе ярăнса курнă, уçă тинĕсре чăмпăлтатнă. Европа тăвĕсем çине чакаланнă. Çитес çул вулаканпа пĕрле ăçталла çул тытăпăр-и? Кам пĕлет? Пурăнăпăр – курăпăр. Акă "Хыпарта" влаç улшăнчĕ. Тен, çĕнĕ хуçа йĕркеллех тӳлĕ те /малтанхинчен ниепле те ыйтса илме май килмерĕ вĕт/ журналист шалăвĕпех тĕнче курса çӳреме май пулĕ? Тур патăрччĕ...

**Ырă шанăçпа – Рита АРТИ.**



● ПАСАРТА.



● БАХИЯ КЕРМЕНĔ.

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.



● ШЫВ СУТАКАН.

# ТЕЛЕРАДИОПРОГРАММА юпа, 27-чӳк, 2

## 27 тунти кун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 1.00, 3.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 «Сегодня вечером» 16+
14.25, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00, 3.05 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ГРИГОРИЙ Р.» 16+
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.00 «Познер» 16+
1.15 «Городские пижоны» «Мотель Бейтс» 18+
4.00 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Кузькина мать. Итоги» «БАМ-молодец!»
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.30, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.50, 14.50 Вести. Дежурная часть
12.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
13.00 «Особый случай» 12+
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «КАМЕНСКАЯ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «УЙТИ, ЧТОБЫ ВЕРНУТЬСЯ» 12+
0.40 «В октябре 44-го. Освобождение Украины» 12+
1.40 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ЧТВ

**6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен**
**7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии**
**8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии**
**11.30-11.50 Вести-Чăваш ен**
**14.30-14.50 Вести-Чувашия**
**17.10-17.30 Вести-Чăваш ен**
**19.35-20.00 Вести-Чувашия**

### Россия К

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.40 Новости культуры
10.15, 1.40 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «РАССЛЕДОВАНИЯ КОМИССАРА МЕГРЭ». «МЕГРЭ И УБИЙЦА»
12.00 Д/ф «Затерянный мир закрытых городов»
12.45, 17.20, 20.50 «Острова»
13.25 Х/ф «ДОЛГАЯ СЧАСТЛИВАЯ ЖИЗНЬ»
14.45 Д/ф «Древо жизни»
15.10 Х/ф «СТАРШИЙ СЫН»
18.00 Д/ф «Гилберт Кит Честертон»
18.10 XX Век. Избранные инструментальные концерты. С. Рахманинов. Концерт №3 для фортепиано с оркестром
19.15 Главная роль
19.30 «Сати. Нескучная классика...»
20.10 «Правила жизни»
20.40 «Спокойной ночи,малыши!»
21.30 «Тем временем»
22.20, 0.00 Д/ф «Сетевой торчок»
0.40 «Кинескоп» с Петром Шепотинником. 58-й МКФ в Лондоне
1.20 К. Сен-Санс. Вариации на тему Бетховена
2.40 «Мировые сокровища культуры»

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.10 «До суда» 16+
9.15, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.30, 14.30, 17.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
11.55 Суд присяжных 16+
13.20 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.55 «Прокурорская проверка» 16+
16.30 Х/ф «ЛУЧШИЕ ВРАГИ» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
20.00 Т/с «КАРПОВ. СЕЗОН ТРЕТИЙ» 16+
22.00 «Анатомия дня»
23.00 Т/с «БРАТАНЫ» 16+
0.55 Т/с «ПРОСНЕМСЯ ВМЕСТЕ?» 18+
1.55 «8 1/2 Евгения Примакова» 0+
2.50 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ГОСУДАРСТВЕННАЯ ЗАЩИТА» 16+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### ТВЦ

6.00 «Настроение»
8.10 Х/ф «НАД ТИССОЙ»
9.45 Х/ф «ДЕТИ ПОНЕДЕЛЬНИКА» 12+
14.30, 17.30, 22.00 События
11.50 «Постскриптум» 16+
12.50 «В центре событий» 16+
13.55 «Простые сложности» 12+
14.50, 19.30 Город новостей
15.10 Городское собрание 12+
16.00, 17.50 Х/ф «ЧИСТО АНГЛИЙСКОЕ УБИЙСТВО» 12+
18.25 «Право голоса» 16+
19.45 Т/с «БЫВШАЯ ЖЕНА» 16+
21.45, 1.25, 4.55 Петровка, 38 16+
22.30 «Украина. Выбор сделан?» 16+
23.05 Без обмана. «ГОСТ или ТУ» 16+
0.00 События. 25-й час
0.30 «Футбольный центр»
1.00 «Мозговой штурм. Конфликтология» 12+
1.45 Х/ф «ПУАРО АГАТЫ КРИСТИ» 12+
3.20 Х/ф «ГРЕХ» 16+
5.10 Т/с «ЖИВАЯ ПРИРОДА: ПРЯМОЙ РЕПОРТАЖ» 12+

### РЕН

5.00 «Территория заблуждений» 16+
6.00, 18.00 «Верное средство» 16+
7.00, 12.00, 19.00 «Информационная программа 112» 16+
7.30, 13.00 Званый ужин 16+
8.30, 12.30, 19.30, 23.00 «24» 16+
9.00 «Военная тайна» 16+
11.00 «Анна Чапман и ее мужчины» 16+
14.00 «Тотальная распродажа» 16+
15.00 «Семейные драмы» 16+
16.00, 17.00 Не ври мне! 16+
20.00, 0.00 Х/ф «СМЕРТЕЛЬНОЕ ОРУЖИЕ» 16+
22.10 Дорогая передача 16+
23.30 «Смотреть всем!» 16+
2.00 Х/ф «ДОМ БОЛЬШОЙ МАМОЧКИ» 16+
4.00 «СЛЕДАКИ» 16+

### Чăваш Наци телекуравě

18.30, 21.00 «Республика» хыпарсен кăларăмě
18.45 «Ылтăн çӳпçерен» /6+/
19.00 “Туслăх йывăçě” /12+/
19.30, 21.30 “Республика” информационная программа
19.45, 21.45 “По существу” /12+/
20.00 “Качество/12+/
20.30 «Акилбупсер» /12+/

### Чăваш Наци радиовě

7.10-8.00 Янра, юрă!. (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тема дня (12+), 15.30-16.00 Çěр Сум. (12+) 9.10-10.00 Не формат. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кěвě. (12+) 10.30-11.00 Чěрěлěх çути. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.10-14.00 Чěререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тěплě калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахěсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
**Çěнě юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунти кун, ытлари кун, юн кун, кěçнерни кун, эрне кун**
6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 — Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 — Новости. (12)

### Чăваш радиовě

6.10 Анонс передач
6.15 События
6.27 Салтак пăтти
6.40 Столичный курьер
6.54 Юрă çаврăмě
6.58-7.00 Погода
* * *
7.10 Мамино право
7.33 Паянхи кун
7.37 Çула тухсан
7.51 Мы - вместе
7.58-8.00 Погода
* * *
12.10-13.00 День за днем. Радиожурнал
* * *
18.10 Çěнě хыпарсем
18.24 Театр у микрофона
18.49-19.00 Вести-Чувашия

## 28 ытлари кун

### 1 КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «ГРИГОРИЙ Р.» 16+
14.20, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00, 3.10 «Мужское / Женское» 16+
Сана тахçантанпах курманнипе ман чунăмра кĕрхи сивĕ кун хуçаланать. Телефона тытмастăн. Ман çырусене хуравламастăн. Суйрăн, манса кайрăн мана. Айван çав эпир, ĕненетпĕр арçынсене. Çав сивĕ каç хам патра хăвармалла марччĕ сана. Эсĕ тархасланăран хирĕçлеме пултараймарăм. Ўкĕнўпе куççуль кăна юлчĕ халь. Мĕнле йăнăш утăм турăм-ши? Ман ыйтусен хуравне кам пĕлет-ши? Этемлĕхĕн вăйлă çуррине нимĕнле те юрама çуккине халь ăнлантăм. Ытла çывăх пулни те, айккинелле сирни те килĕшмест вĕсене. «Арçын хĕрарăмшăн тус-юлташ пулма пултараймасть», – тенине ĕненетĕп халь. Мĕнех, пĕччен те, юратупа савăшусăр та пурăнаятăп. Çынна çумра вăйпа тытса тăма çук. Каякана вара чармалла мар. Тен, турă çырни хăçан та пулин ман валли те тупăнĕ.

**АЛЕНА.**

КУН ПЕК ТЕ ПУЛАТЬ

# Ĕнерхи кун çути

«Паян мачча çуса тасатмалла, ыран специалистсем ĕçе пуçăнĕç», – терĕ ашшĕ-амăшĕн комитечĕн ертўçи пурне те илтмелле. Ача садĕнчи пўлĕмсене хăйсен вăйĕпе хăтлăх кĕртме хăнăхнисем хирĕç чĕнмерĕç. Хăшĕ-пĕри тĕрлĕ сăлтав тупса киле васкарĕ. «Укçа пуçтарса пани çитмест...» – хыттăнах каларĕç хăйхисем. Вĕсене, паллах, ирĕксĕрлесе ĕçлеттереймĕн. Чи яваплисем кăна коридорта тăрса юлчĕç. Воспитатель шалти пўлĕмре ачасемпе кĕнеке вуларĕ.

«Уй, тыт мана, ўкетĕп...» – мачча хырма пуçласанах Саша еннелле тайăлчĕ Маша. Çав самантрах хĕрарăм вĕри тутипе арçын питĕнчен сĕртĕнчĕ, майĕнчен ыталарĕ. Ачине пĕччен çитĕнтерекенскер çакна кăна кĕтнĕ тейĕн. «Ан çулăх...» – те шўтлесе, те чăнласа каларĕ пĕр общежитире пурăнакан пĕлĕшĕ. Хĕрарăм хăнк! та тумарĕ. Çакăншăнах вăрçă пуçламалла-и? Никам та асăрхамасса шаннăччĕ Маша. Анчах кунта йăлт куç умĕнче – никамран та нимĕн те пытараймăн. Те тахçан малтан пĕр-пĕрне савнине аса илчĕ вăл? Çав вăхăта пĕр самантлăха та пулин каялла таврăс килчĕ-ши? Ун чухне тем пулчĕ Машăна, кĕтментуман çĕртен Мишăпа уçăлса çўреме пуçларĕ. Кайран унранах ача çуратрĕ. Миша Мускава тухса кайрĕ те вĕсем патне таврăнмарĕ. Çынсем каланă тăрăх – вăл унта урăх хĕрарăмпа пурăнать. Машăпа хĕрĕ валли сайра хутра çеç укçа ярса парать. Çапах аптăрамасть хĕрарăм. Ăна ялти ашшĕ-амăшĕ нумай пулăшать. Кукашшĕпе кукамăшĕ мăнукне те пăхрĕç.

Савнийĕ пилĕк çул каялла Мишăна суйласа илнĕшĕн пăшăрханнине кăтартмарĕ Саша – Машăн хĕр-тантăшне качча илчĕ. Халĕ мăшăрĕпе пĕрле икĕ ача çитĕнтереççĕ. Вĕсем çемйипе паркра çўренине пĕрре мар сăнанă. Арăмĕпе упăшки пĕр-пĕрне хаклама пĕлнине кирек кам та асăрхĕ. Чăнах, телейлĕ çак мăшăр. Саша ирĕн-каçăн ача садне васкать. Çитменнине, пĕр пухуран та юлмасть вăл.

Ĕлĕкхи савнийĕ йĕри-тавра чылай явкаланчĕ Маша. Юриех унпа юнашар тăрса ĕçлерĕ. Арçыннăн кăмăлне çавăрмашкăн шўтсем каларĕ. Сăлтавсăрах кулчĕ. Çав вăхăтрах ăна шыв улăштарма темиçе хут ячĕ. Аллинчи çĕтĕке ўкерчĕ те – Сашăна илсе пама ыйтрĕ.

«Çўле пăхса ĕçленипех пуç çаврăнма пуçларĕ. Киле каяс килмест. Кам кафене пырать манпа?..» – хăйне ирĕклĕ туйрĕ Маша. Унăн шухăшне никам та ырламарĕ, çавăнпах калаçăва хутшăнакан пулмарĕ. Саша çине вăрттăн пăхса илчĕ – арçын та илтмĕш турĕ. Каçсерен çухалса çўреме хăнăхман вăл. Килте ĕç сахал-и? Кафене кайма кăмăл та, вăхăт та çук унăн. Арăмĕ пĕлсен мĕн калĕ тата?

Ăнсăртран Сашăн телефонĕ сас пачĕ. Вăл мăшăрĕпе ăшшăн калаçнине итлесе ăмсанчĕ Маша. Унăн кулли самантрах таçта çухалчĕ.

Мачча тасалсанах тĕпренчĕкне çавăтса кил еннелле утрĕ хĕрарăм. Ĕç вĕçленни те савăнтармарĕ ăна.

**Екатерина ЦВЕТКОВА.**



ВĂТ, ТĔНЧЕ!

# Укçа илĕртмĕшĕ

"Питĕ çăмăлттайла хăтлантăм иккен", – пĕрре кăна мар ўкĕнтĕм хăнара сĕтел хушшине ларсанах. Çук-ха, хуçи хăна кĕтсе илме хатĕрленнине тўрех асăрхарăм. Хваттерте таса, тирпейлĕ. Кунта хусах пурăнать теейĕн. Сĕтел çинче – хаклă йышши хĕрлĕ эрех. Пĕлнĕ пекех эпĕ юратакан иçĕм çырлине те туяннă. Кăмăллă кĕвĕ... Тата мĕн кирлĕ темелле? Пушшех те – тахçанах кĕтнĕ тĕл пулу. Вĕçсе тенĕ пек çитсе лартăм вĕт. Чунăм хăпартланнăскерĕн икĕ сехет те пĕр сисĕнмесĕр иртсе кайрĕ...

Кăмăла çĕклеме ăшă пĕр сăмах та çителĕклĕ, çапла-и? Мана вара çур сăмах та мар, пĕр ўкерчĕк çеç кирлĕ пулчĕ кăмăлăма пуçĕпех хуçма...

Тĕл пуличчен тем çинчен те çăмăллăнах калаçаттăмăр. Калаçу шыв юххи пек сыпăнса пыратчĕ. Курнăçăнтăмăр та – шыв хыптарнă пек çăвар та уçас килмест.

"Эпир дискотекăра, эсĕ хăçан килетĕн?" – тесе чĕннине илтсен эх, савăнтăм та – хăть ăçта кайтăр! Хам шухăшсемпе пĕччен юлас килчĕ. "Çук, савни çумĕнчен уйрăлас килмест", – хирĕçлерĕ çаксене. "Мĕскер эсĕ?! – чутах кăшкăрса яраттăм. – Кай, кай. Ан кĕттер çынсене. Эпĕ, мĕн, паян кунта та... Санăн вара вĕсемпе хутшăнмалла". Çук, мур, темĕнле ўкĕтлесен те вырăнтан та хускалмасть. Каллех шăнкăравлаççĕ... Çăвар карам пек тукаласа каçхи клуба хăвалатăп ăна.

Пĕр шухăшласан – тĕрĕс те турăм, ун патĕнче хăнара пулса мĕн кăна пĕлмерĕм. Анчах пĕр чечек çинчен теприн çине вĕлтĕртетсе çўрекен лĕпĕш тĕлне лекнипе чун хурланчĕ. Макăрманни кăна. Çапах кăмăлăм хуçăлнине кăтартмастăп, сăмаха юптаратăп кăна. Юлашки рейспа килнĕскерĕн пĕрремĕш маршруткăна мĕнле те пулсан кĕтсе илмелле-çке.

Шурă иçĕм эрехне пĕччен çур кĕленче пушатрăм ĕнтĕ – пуçра та çук. Ытти чухне кун чухлĕ ĕçсен йăванмалла кăна.

Унăн вара куçĕ çўрĕлме пуçларĕ ĕнтĕ. Çывăрма выртма та вăхăт çитсе пырать...

Вĕри тути питрен сĕртĕнсенех чышса ятăм çакскере. Ара, вăл спортсмен та – хăнк та тумарĕ. Хытăрах ыталаса илчĕ кăна. "Епле кĕтрĕм сана, мĕн-ма хăвалатăн мана? Вăй питти арçынна çак таранччен чăтса пурăнма çăмăл тетĕн-и?.." – çавăнтах чуп тăвать, хăлхаран "çуллă" сăмахсем пăшăлтатать. "Ăхă, куртăм эпĕ эсĕ мĕнле тунсăхланине", – ытамĕнчен вĕçерĕнес тесе тапаланатăп. Хам вара люстра тăррине тĕллесе кăтартатăп. Кил хуçи пуçне çўлелле çĕклемерĕ те, анчах сăмах мĕн пирки пынине тўрех ăнланчĕ. Тўрре тухма-и унта? Сасăпах кулма тытăнчĕ. Мĕн амакĕ? Улталани – куç умĕнче, вăл вара ахăлтатса ларать. Те тăрса тухса утмалла, те çупса ямалла, те иçĕм çырлин турилккине пуçĕнчен тăхăнтартмалла?

Чăнах та, ман вырăнта пулсан пур чиперук та тарăхмалла. Ара, люстра çинче... чĕнтĕрлĕ труссы çакăнса тăрать! Хальхи вăхăтра çуртсене темĕнле стильпе те илемлетеççĕ-ха. Анчах кунашкал "ноу-хау" савни патĕнче пĕррĕмĕш хут пулакан кашни çынна вĕчĕрхентерĕ. Çитменнине тата "камăн-ши?" шухăш канăç памасть.

"Ара, ку укçа илĕртмелли мел", – ăнлантарма пуçларĕ хăйхи. "Ăхă пуль, ясарлăх палли тесен ăнланăттăм", – черккери эрехпе питĕнчен сапманни кăна. Намăссăр! "Фен-шуй тăрăх, мул илĕртме ятарласа çапла тăваççĕ. Ĕненместĕн-и? Атя, эппин, инçех мар пурăнакан тăвансем патне. Вĕсен люстри темиçе плафонран тăрать, вăт кашнин çинче пĕрер хĕрлĕ труссы çакăнса тăрать", – чăнласах ăнлантарать мана вăл.

Ĕненмерĕм паллах. Анчах кĕçех кун пирки шухăшлама пăрахрăм ĕнтĕ. Çепĕçлĕхĕпе тата ачашлăхĕпе кăмăла çавăрса яма пултарчех...

**Н.МАРИНОВА.**

САНĂН ТУСУ ПУЛАМ-И?

**Эпĕ 33 çулта. Качча кайман, ача çук. Ĕçместĕп, туртмастăп. Пурăнмалли кĕтес пур. Кĕлеткерен, сăн-питрен илемлĕ. Çемье çавăрма 30-45 çулсенчи арçынпа паллашма кăмăл пур.**

**МАРИНА.**

* * *

**Эпĕ 43 çулта. Пиллĕкри хĕрĕмпе ялта пурăнатпăр. Качча каярах юлса тухрăм, анчах пурнăç ăнмарĕ. Упăшка ĕçе юратманскер лекрĕ. Пĕрле пурăнаймарăмăр.**

**Кун хыççăн кун, çул хыççăн çул иртет. Çапла ĕмĕр те сисĕнмесĕрех вĕçленĕ. «Чăваш хĕрарăмĕ» урлă йĕркеллĕ арçынпа паллашас ĕмĕт пур. Сирĕн кăларăма хĕрарăмсем çеç мар, арçынсем те алăран ямаççĕ. Эрех-сăрапа иртĕхекен çынпа пĕр çулпа утаймăп. Ырă кăмăллисене килĕштеретĕп. Тен, ман пек шăпалли те пур? Ачана арçын ĕнси çине хăпартса лартма шухăшламастăп. Анчах çемьерен уйрăм, тĕлли-паллисĕр çўрекенскер те кирлĕ мар. Эпĕ 164 сантиметр çўллĕш, 52 килограмм. Ялта пурăнмалла пулать-и, хулара-и – маншăн пур пĕрех.**

**Телефонсем редакцире.**

**МАРИНА.**

ЮБИЛЕЙ

# Валерий ЯКОВЛЕВ: «Куракан хĕлхемĕ вăй парать»









/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Пӳрт пушă пулсан та йĕри-тавралăх чĕрĕ. Çавăнпах унта чун туртать. Çимĕкре асăнма каймасăр юлман.

Пăшăрхантараканни татах та пур. Эпĕ Виçпӳрт Шăмăршăри çичĕ класлă шкулта вĕреннĕ. Кайран пирĕн ялта та тăхăр класлă шкул уçрĕç. Юлашки çулсенче ачасем сахалланса юлни директорпа учительсене те, ял-йыша та, мана та кулянтарать.

Хам çуралнă района çителĕклĕ таран пулăшса пырас килет. Шкул, ял библиотекисене 100-шер, 200-шер кĕнеке парнеленĕ.

Пирĕн ялта чиркӳ çуртĕнче клуб уçнăччĕ. Çакăнта чиркӳ çĕнĕрен хута ярас ĕçе те хутшăнтăм. Çылăхăм та пур. Вăрçă хыççăн укçа пулман. Çавăнпах кино е спектакль кăтартасса пĕлсен ачасемпе пĕрле темиçе сехет маларах форточкăран кĕрсе сцена йывăç урайĕ айне выртаттăмăр. Кайран тухнă ĕнтĕ. Çавăнтанпах сцена – алтарьпе танах.

Мускавра вĕреннĕ вăхăтра каникула тăван яла килсен спектакльсем лартаттăм. Учительсене те, колхоз ертӳçисене те хутшăнтарнă. Алтарь вырăнĕнчи сцена çинче юрланă та, ташланă та.

Юбилей каçне кайсан та чиркĕве кĕрсе тухрăм. Çывăх çынсен ячĕпе çурта лартрăм. Пачăшкăпа паллашрăм. Масар çине кĕрсе несĕлсене асăнтăмăр.

**– Сирĕн ĕç кунĕ мĕнрен пуçланать?**

– Эпĕ театртан аякрах пурăнмастăп. Ĕçе пĕр 3-4 çухрăм çуран утатăп. Артистсем киличчен 1 сехет маларах çитсе тĕрлĕ ĕç пурнăçлассине йăлана кĕртнĕ.

Пĕтĕм пурнăç театрта иртет. Тĕрĕссипе, куллен 13-14-шар сехет ĕçленĕ. Унсăр пуçне общество ĕçне нумай пурнăçланă. Республикăри театрсен ушкăнĕн ертӳçинче 10 çул тăрăшнă, 2 хутчен депутата суйланнă, президиум членĕ пулнă. Çав вăхăтрах 100 ытла концерт йĕркеленĕ. Тĕслĕхрен, йăхташăмăрсем патĕнче литературăпа искусство кунĕсем, республикăра юбилейсем, Акатуй... иртнĕ. Пысăк йыша явăçтарнă. Аслă Çĕнтерӳ 35 çул çитнине халалланă уяври хорта 9 пин çын юрланăччĕ.

**– Эсир "режиссер – кĕтӳç" тетĕр...**

– Вырăс театрĕн реформаторĕ Немирович-Данченко çавăн пек каланă: "Режиссер вăл – ăнлантаракан, йĕркелекен, вĕрентекен". Уйăхĕ-уйăхĕпе шухăшласа çӳрени çын куçне курăнмасть. Залра ларакансенчен 80 проценчĕ режиссер кам иккенне, мĕн ĕç тунине пĕлмест те пулĕ тетĕп. Чаршав уçăлсан артистсем, декораци курăнать-çке.

**– Театрта çирĕпленнĕ йăла-йĕрке çинчен пĕлес килет.**

– Унчченхи йăла-йĕркене тытса пынисĕр пуçне çĕннине кĕртнинче манăн тӳпе те пур пуль тесе шухăшлатăп. Режиссер ĕçĕ пирки каласан, манăн тивĕç – чăваш халăхĕн илемне, чĕлхине упраса хăварасси, унсăр пуçне Европа театрĕн эстетикипе хамăрăн куракана паллаштарасси. Çакă пурнăç çинчен шухăшлама май парать.

Пирĕнччен пултаруллă ăру ĕçленĕ. Максимов-Кошкинский, Ырзем, Ургалкин, Алексеев, Родионов, Шорникова, Долгова... Пурне асăнса та пĕтерейĕмĕн. Вĕсене асра тытманни эпир хамăрăн несĕле маннипе пĕрех. Эпĕ, сăмахран, хамăрăн йăх тымарне 350 çул таранччен пĕлетĕп.

Артистсенчен чылайăшĕ хăйсен юбилейне халăхпа пĕрле паллă тăвасшăнах мар. Ирĕксĕрлесе тенĕ пек уява хатĕрлентернĕ вĕсене. "Сире мар тăк чăваш театрне, куракана кирлĕ çакă", – ăнлантаратăп ĕçтешĕмсене.

Пирĕнтен уйрăлса кайнă артистсен вил тăприсене тирпейлесе тăрассине те театр хăйĕн çине илнĕ. Çакăншăн никам та кăкăр çапмасть.

Эпир пурте театр институтĕнче пĕлӳ илнĕ. "Театр вăл – çемье" идеологипе вĕрентсе кăларнă пире. Кил-йыш туйăмĕ сĕвĕрĕлсен театр пĕтет. Кашнин хăйĕн кăмăлĕ, çапах та эпир пĕр чăмăр пулма тăрăшатпăр. Ку та – пурнăç, ĕç йĕрки.

**– Чыс-хисеп çĕнсе илмешкĕн мĕн пулăшнă-ши?**

– Каллех кил патне таврăнмалла. Кашни пулăмăн хăйĕн йĕрки-курки пур. Мĕн те пулин сиктерсе хăварсан çемье телейсĕр пулать.

Манăн анне питĕ çепĕç чĕлхеллĕччĕ. Çынна алăк патĕнче тăратман, сĕтел хушшине лартса чей ĕçтермесĕр кăларса яман. Çакна курса вĕренсе пынă. Франци философĕ, çыравçи Жан-Поль Сартр калашле, пултарулăх çынни ачалăхра асра юлнине ĕмĕр тăршшĕпех ăшĕнчен кăлармасть.

Пуян чĕлхеллĕ писательсене вуласа ӳснĕ. Чăвашла таса калаçакансемпе хутшăннă. Театрта та Ухсай, Артемьев, Хусанкай, Уяр, Илпек... чĕлхине упрасшăн.

**– Çапах та эсир артист, режиссер ĕçне суйламан тăк хăш çул-йĕрпе утнă пулăттăр?**

– Ялта кинопа спектакль курмасăр юлман. 6-мĕш класа çитиччен кирек хăш уявра та туртса кăларсах ташлаттаратчĕç. Кайран, аслă классенче, халăх умне вĕренпе сĕтĕрсе кăларма та май килмен – вăтанма пуçланă. Пур пĕрех çак илем патне пĕчĕккĕрех туртăннă.

Радио та, çутă та, çул та пулман. Институтра вĕреннĕ чухне Канаша çити тракторпа килеттĕмĕр.

Юлташсемпе пĕрле радиоприемник турăмăр. "Пионерская правда" хаçатран чертеж ыйтса илнĕччĕ. Эпĕ ас тăвасса, юрă-кĕвĕ итлеттĕмĕр. Темле çавăнта "дирижер" сăмах тухрĕ. Вăл кам иккенне пĕлмен. Çапах та дирижер пулма шухăшласа хунă.

Вĕреннĕ чухне шкул хорĕ пурччĕ. Шупашкарти фестивале эпĕ те тăватă арçын ачапа пĕрле хĕсĕнсе килтĕм. Аннене, икĕ аппана пĕлтерсе театр институтне кĕмешкĕн экзамен тытма юлтăм. Ун чухне пĕрремĕш хут рояль курни асра.

Экзамен вăхăтĕнче хулăнрах сасăпа Денисовăн "Тальянкка" юррине шăрантартăм. Лайăх юрланă пулмалла. Ватăрах арçын мана кăчăк туртса чĕнчĕ. "Мисерехă эс?" – тет. "Вун улттăра", – хуравларăм. Вăл Иоаким Максимов-Кошкинский пулнă-мĕн. Кайран Мускава командировкăна кайсассăн хăна çуртне вырнаçайманран вĕсен килте çĕр каçнăччĕ.

**– Паян мĕн хавхалантарать?**

– Театр – çак самантра пулса иртекен искусство. Вăл пĕтет тесе 100 çул та каланă. Ун вырăнне кино, Интернет йышăнать имĕш. Халăх пурăнсассăн, унăн чĕлхи упранса юлсассăн театр та пулать.

Залран хăват килнине, çын хĕлхемĕ ăшăтнине туйни вăй парать. Хăй вăхăтĕнче 2-3 уйăх малтан билет илни те пулнă. Спектакле халăх сахал çӳренине те чăтса иртнĕ.

Сцена ăстисен пултарулăхĕ куракана чунне витеретех. Театра сайра килнишĕн ӳкĕннине илтетĕп. Самана чун хавалне аркатнине спектакль урлă сăнлани витĕмлĕ. "Камит кăтартăр-ха" – ыйтакан та пур. Çапах куççуль кăларакан спектакльсен вăйĕ ытларах. Вĕсем чуна ларса юлаççĕ.

Ватă çынсем те телефонпа шăнкăраласçĕ. "Ĕлекхи спектакльсене мĕншĕн телевизорпа кăтартмастăр?" – ӳпкелешеççĕ. Апла тăк артистсен вăййи тата театр вăйĕ çынсене кирлĕ.

**– Çитес вăхăтра куракансене мĕнле ĕçсемпе тыткăнлама палăртатăр?**

– Вăй çитнĕ таран спектакльсем лартас килет. Сăмса каçăртмасăр каласассăн – вĕсенчен чылайăшĕ тивĕçлĕ шайра пулса тухрĕç. Чăваш драматургĕсем сĕнекен пьесăсене, тĕслĕхрен, авторпа пĕрле улшăнусем кĕртнĕ, унтан тин сцена çине кăларнă.

Кĕçех Константин Иванов çулталăкĕ пуçланĕ. Хăй вăхăтĕнче "Нарспи" спектакль тунă-ха. Халĕ республикăра икĕ "Нарспи": пĕрне – Оперăпа балет театрĕнче, теприне филармонире кăтартаççĕ. Хăй вăхăтĕнче мана "Нарспи" ларттарас тесе парти обкомне те чĕннĕ. Анчах поэзи шайлă пьеса çуккипе килĕшмен. Унсăр пуçне манăн Нарспипе Сетнере Нина Григорьевăпа Алексей Ургалкина выляттарас килетчĕ. Анчах вĕсем пĕр ăрури çынсем мар. Манăн шухăшпа, Константин Иванов "Нарспие" курнă пулсассăн шăпах Нина Григорьевăна йышăнĕччĕ. Çак сăлтава пула эпир урăх пьеса суйласа илтĕмĕр. "Константин Иванов" ятлă вăл. Ăна Максимов-Кошкинский çырнă. Ку спектакле театрта икĕ хутчен лартнă. Кунти ыйтусем паян та çивĕч.

Марина Карягинăн "Куккуклă сехет", Владислав Николаевăн "Пихампар чунĕ манра" ĕçĕсене куракан патне çитересшĕн.

Михаил Лермонтовăн "Маскараднĕ" лартма 30 çул ĕмĕтленсе пурăнтăм. Çакăн тавра Геннадий Айхипе те калаçнăччĕ. Анчах манăн Арбенин сăнарĕнче каллех Алексей Ургалкина курас килетчĕ. Вăл ун чухне 60-а çитнĕ – выляма пултараймасть.

Антон Чеховăн пьесисене тĕкĕнеймен. Вăл маншăн – чи юратнă драматург. Тĕлĕнмелле черчен, чĕнтĕр витĕр курăнакан сăнарсене уçма çăмăл мар. Чехова ăнланакан, пĕрешкел шухăшлакан артистсем кирлĕ. Çапах "Чайка" пьесине лартма ĕмĕтленетĕп.

**– Эсир 1961 çултанпа театрта ĕçлетĕр. Ертӳçĕ тилхепине 35 çул тытса пыратăр. Вăхăт иртнĕçемĕн ĕçлеме çăмăлланса пынă-и е йывăртарах пулнă-и?**

– Йывăртарах пуль. Мĕншĕн тесен ĕлĕкрех вăй нумай пулнă. Çулталăкне çĕнĕ 4 спектакль кăларнă. Çав вăхăтрах концерт программисемпе ĕçленĕ.

Самана, ăру улшăнса пыни сисĕнет. Çамрăксем çăмăл пурнăçпа пурăнасшăн.

Çапах та этем – этемех, унăн чунĕ пур. Маншăн ĕçе куракан хак пани нимрен хаклă. "Мунча кунĕ" спектакль хыççăн хыçалти ретри пĕр хĕрарăм тăнă та: "Эпир те тасалтăмăр", – тесе кăшкăрнă. Çакă – чи çӳллĕ шайри хак.

"Вĕçкĕн Ваççан çиччĕмĕш арăмĕ" спектакльпе Мускава гастроле кайнăччĕ. Нина Григорьева ватăлса çитнĕ амăшне вылятчĕ. "Çитес вăхăтрах анне патне яла каятпăр", – хыпăнса ӳкрĕç Мускаври чăвашсем. Апла тăк театрăн вăйĕ пур.

*Кĕçнерни кун Валерий Яковлев 75 çул тултарнине халалласа вăл лартнă спектакльсен фестивалĕ пуçланчĕ. Çак чухнех ăна республика ертӳлĕхĕпе ĕçтешĕсем саламларĕç. Куракансем "Праски кинеми мăнукне авлантарать", "Ялта" ĕçсемпе паллашрĕç ĕнтĕ. Çавнашкалах "Укçа чул кастарать", "Вĕçсе иртеççĕ кайăксем", "Хурлăхлă хурама сасси", "Албена юратăвĕ", "Мунча кунĕ" спектакльсем пулĕç.*

### "Шăпана ӳпкелеместĕп"

Валерий Николаевичпа Нина Михайловна 54 çул пĕрле пурăнаççĕ. Икĕ ывăл çитĕнтернĕ вĕсем. Куç тулли мăнукĕсемпе йăпанаççĕ.

"Кил хуçи кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ. Отпускра кăна тинĕс хĕррипе пĕрле канаттăмăр. Ачасем ашшĕ-амăшĕн тĕслĕхне ăша хывса, ĕçченлĕхне курса ӳсрĕç. Вĕсем хăйсен çулне тупнă ĕнтĕ.

Мăшăрăм ĕçе те, киле те çав тери юратать. Апат тиркемест. Яшка пулсан ăна урăх нимĕн те кирлĕ мар. Килте вăрçăнса курман.

Театрта кăна мана ыттисенчен ытларах та лекет. Унта эпир упăшкапа арăм мар, режиссерпа артист-çке.

Шăпана нимпĕн те ӳпкелеместĕп. Эпĕ пур енĕпе те телейлĕ", – чунне уçать Раççей халăх артистки Нина Яковлева.

### Çĕнтерӳ тути

**Ертӳçĕ çинчен артистсенчен тĕплĕнрех никам та каласа кăтартаймĕ.**

*Сергей ИВАНОВ, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артисчĕ:*

– Валерий Николаевич мана Мускава вĕренме ямашкăн суйласа илнĕ. Шăхасанта тĕл пулнăччĕ унпа. Çавăнпах вăл маншăн – атте те, асатте те, унсăр пуçне театрти чи сумлă çын, чи лайăх режиссерсенчен пĕри.

Салтакран килсен Валерий Николаевичпа ĕçлеме çав тери йывăр пек туйăннăччĕ. Унашкал çирĕп ыйтнине урăх нисра та тĕл пулман-ха та. Кайран спектакльте выляма çăмăл – çакна ăнланса илни пур йывăрлăха та çĕнтерме пулăшрĕ. Вăл тĕплĕ ĕçленине кура кашни сăнар хаклă пулса тухать.

*Геннадий МЕДВЕДЕВ, Чăваш халăх артисчĕ:*

– Валерий Николаевич – тĕлĕнмелле вăйлă ертӳçĕ. Вăл – 3-4 планпа пурăнакан çын. Малашне мĕн пулассине йăлт курса-пĕлсе тăрать. Театрта вăл пĕлмен ĕç çук. Монтировщик ĕçĕнчен пуçласа костюм çĕлени таранччен пăхса тăрать. Сĕнӳсем парать.

1990 çулта Раççейри чи лайăх театрсем Орел хулине фестивале пуçтарăннăччĕ. Çав йышра наци театрĕсенчен эпир кăна пулнă. Пурне те хыçа хăварса çĕнтерӳпе таврăнтăмăр. Çавăнтанпа фестивальсен эпопейи пуçланса кайрĕ. Нумай чухне Валерий Николаевичăн спектаклĕсем çĕнтерсе пыраççĕ.

**Страницăна Марина ТУМАЛАНОВА хатĕрленĕ.**

**– Сьюзен, Тим Роббинспа иксĕрĕн хутшăнăвăр, хут уйăрттарман пулин те, идеал шайĕнчеччĕ...**

– Çапла. Ман пата халĕ те урамра пырса ыйтаççĕ: “Мĕнле пулса тухрĕ-ха капла? Нивушлĕ тĕнче чăнах та пĕтсе килет?” /Кулать/. Хăйсем пирĕншĕн хурланнине пĕлтереççĕ. Пултарулăхăмăра хаклакансене ăнланма пулать – вĕсем пире идеал шайĕнче курма хăнăхнă-çке, эпир вара вĕсен хăнăхăвне аркатрăмăр. Пурнăçра пĕрремĕш хут роль пачĕç.

**– Çапах та Тим – сирĕн икĕ ачан ашшĕ. Мĕнле сăлтава пула уйрăлма шухăшларăр-ха?**

– Шухăшлав улшăнчĕ-тĕр... Тим çумĕнче эпĕ хама чăнчăн хĕрарăм пек туяттăм. Уйрăличчен Бродвей театрĕнче Эжен Ионеско пьеси тăрăх хатĕрленĕ “Король вилет” спектакльте выляттăм. Çавна май вĕçĕмех вилĕмпе пурнăç çинчен шухăшсем явăнатчĕç лаштарнă. **Вĕсем иккĕшĕ пĕрле пинг-понг клуб-барне уçнă/.**

– Мĕнех вара пĕри тепринчен кĕçĕнрех пулни? Анчах та пирĕн, хĕрарăмсен, общество ан сивлетĕр тесен чикке лайăх пĕлмелле. Эпĕ пĕлсех тăратăп: мана рольсем те ахалех лекмен, ку – шăпа. Çапла, эпир Джонатанпа пĕрле вăхăта нумай иртеретпĕр. Унпа пурнăçăн кирек хăш еккипе те пĕр шухăшлă тесен тĕрĕсрех те



**Сьюзен Сарандон Тим Роббинс актерпа 21 çул çырăнмасăрах пурăннă. Çак çыхăну Голливудра чи çирĕпписенчен пĕри шутланнă. Анчах та пурнăçра темĕн те пулать – 2009 çулта мăшăр, тĕнчене тĕлĕнтерсе, уйрăлнă. Анчах та Сьюзен – пуç усакан йышшисенчен мар. Депресси авăрне путма шухăшламан та вăл. Ĕçлет. Унăн ачисем ÿссе çитнĕ ĕнтĕ, мăнук та пур. Унсăр пуçне хĕрарăм хăйĕнчен 31 çул кĕçĕнрех еркĕнĕпе пĕрле бизнес пуçланă.**

# Ĕмĕре тăмана пек çывăрса ирттерес килмест

Чаппа çыхăннă пулăм çапла ĕнтĕ вăл. Уйрăлнă чухне çынсем пире сивленине туйсах тăтăмăр – пирĕншĕн савăнма хăнăхнă, эпир вара кунта акă çынсене хурлантаратпăр... Çакна кăна калас килет – пирĕн хутшăну вĕçленнĕшĕн ман пек çапах та никам та хурланманах. Анчах та, тепĕр тесен, сана кам та пулин ир-ирех: “Эпир сире пур пĕр юрататпăр!” – тени начар-и вара? /Кулать/. Кун питĕ аван пуçланнине кăна пĕлтерет-çке ку!

**– Сирĕн шухăшпа апла телейлĕ çемье пулма пултараймасть-им?**

– Мĕншĕн? Питĕ аван япала ку. Маншăн мар пулĕ – çавă кăна. Эпĕ, чăнах та, çемье институтне нихăçан та ĕненмен – тĕн енĕпе те, социаллă пĕлтерĕшĕ тĕлĕшпе те. Пĕрремĕш тата юлашки хут эпĕ 20 çулта Крис Сарандона качча тухрăм. Ăна та пулин ахаль мар – унсăрăн пире университет кампусĕн пĕр хваттерĕнче пĕрле пурăнма ирĕк памастчĕç. Эпĕ Америка католик университетне вĕренме кĕнĕччĕ, унта вара йĕрке питĕ çирĕп. Крис манăн пĕрремĕш арçын тата шанчăклă юлташ пулса тăчĕ. Эпĕ ăна чăтăмлăхĕшĕн тата ырă кăмăлĕшĕн тав тăватăп. Хĕрлĕхе çухатнине пĕлсен тăвансем те пĕрлешме хистерĕç. Чăн та, çемье ун чухне маншăн питех те пĕлтерĕшлĕччĕ. 60-мĕш çулсем! Ирĕклĕ юрату, хиппи... Ман пирки халĕ те хиппи теме юрать-тĕр. /Кулать/. Çапах та эпир Криспа хамăрăн туйăмсене кашни çулах тĕрĕслеттĕмĕр – пĕр-пиринчен ыйтаттăмăр: халĕ те пĕр хум çинчех-и эпир, тепĕр çулталăк пĕрле пурăнмаллах-и пирĕн е çук-и? Ача çураличчен питех те пĕлтерĕшлĕ çакă. Çулталăкра пĕрре мар тăк, хăть пилĕк çулта пĕрре тĕрĕслемеллех туйăмсене çапла. Çук, çын умĕнче вылямалла мар, хăвăра телейлĕ мăшăр пек кăтартма тăрăшмалла мар – лармалла та чуна уçса калаçмалла. Пĕрпĕрне ĕмĕрлĕх тупа туни туйăмсене упрама нимĕн чухлĕ те пулăшмасть. Хутшăнусем те ÿссе пыракан организм евĕрех вĕт. Упăшкана пулах эпĕ актриса пулса тăтăм. Пĕррехинче Криса рольте тĕрĕсленсе пăхма чĕнчĕç те, эпĕ те пĕрле кайрăм. Çапла мана та хамăн пуçра. Çакаах витĕм кÿчĕ пулас – Тимпа иксĕмĕрĕн хутшăнусем пирки ыйтусем çуралма пуçларĕç. Çемье çыншăн – капкăнпа танах. Туй кĕрлесе иртнĕ, килĕшĕве алă пуснă, апла малашне лăпкăнах сывăрма пултаратăн. Анчах та манăн ĕмĕрĕме тăмана пек сывăрса ирттерес килмест. Пĕр-пĕр çынпа пĕрле ытла та вăрах пĕрле пурăнни икĕ енĕшĕн те усăллă мар. Енчен те ЗАГС хыççăн та эсир çывăрса каймастăр, партнершăн кăсăклă пулас тесе темĕн те тăватăр, апла çемье – сире чухах. Çук тăк вара – каçарăр...

**– Сирĕн ачăр-аннĕрĕн тăхăр ача пулнă, эсир – асли. Ку тата мĕнле-тĕр витĕм кÿнĕ-и сире?**

– Эпĕ килтен 17-ре тухса тартăм! /Кулать/. Халĕ арçынпа хутшăннă май эпĕ çак роле хамран сиретĕп. Ÿкерÿ лапамĕнче – урăх сăмах: унта эпĕ такамшăн та амăшĕ пулма хатĕр. Яланах мĕн те пулин тумалла манăн – вĕçĕмех уяв йĕркелетĕп, çуралнă кунсем, кĕтмен парнесем, тутлă апат-çимĕç... Анчах та арçынпа хĕрарăмăн хăйне урăхларах тыткаламалла. Ачасемшĕн эпĕ кăна яваплă пулнă. Ахальтен каламаççĕ тĕр: амăшĕ – тĕп блюдо, арçын – десерт. Эпĕ ывăлăмсене экранран тăкăнакан усаллăхран, хаярлăхран, ирĕклĕ савăшуран хÿтĕлеме яланах тăрăшнă. Хĕрĕн ырă ятне пăсмалла мар тесе вĕрентнĕ. Кирек мĕнле пулсассăн та – арçын айăплă. Унсăр пуçне ачасене пĕр-пĕриншĕн пурăнма вĕрентнĕ: кирек ăçта пулсан та вĕсен тăванне пулăшма чупса пымалла...

**– Тим Роббинс та сирĕнтен 12 çул кĕçĕнрех пулнă, хальхи юлташăр Джонатан Бриклин вара ывăлăрсен çулĕнче кăна... /Унпа Сьюзен юлташĕсем патĕнче уяв каçĕнче Тимпа уйрăличченех паллашнă. Уява пинг-понга халалланă. Джонатан арăмĕпе шăпах çак вăййа пула уйрăлнине каланă. Арçын çемьесен уяв каçĕсене видеопа ÿкерсе çÿренĕ, çăкăр туянмалăх çапла ĕçлесе илнĕ. Чăн та, ăна паллă актерсем те чĕннĕ. Сьюзен та Джонатана Тим 50 тултарнине уявланине ÿкерме саккас панă. Мăшăр уйрăлсан Джонатан Сьюзена пинг-понгпа тус-**

пулать-тĕр. Вăл манăн партнер. Эпĕ ăна пуçĕпех шанатăп.

**– Эсир, паллă актриса, пинг-понгпа аппаланатăр, ăна Джонатанпа пĕрле аталантаратăр... Кăсăклă...**

– Темиçе çул каялла мана эпĕ пинг-понг клубне уçасси пирки кам та пулин каланă тăк кулса вилнипе урайне ÿкĕттĕм. Анчах та мана ÿкĕте кĕртрĕç-кĕртрĕçех. Халĕ ĕнтĕ хăвăрах куратăр – Нью-Йоркри пирĕн клуб аванах тупăш кÿрет. Халĕ эпир кун пек клубсене ытти хулара кăна мар, ют çĕр-шывсенче те уçатпăр. Сăлтавĕ ансат – ку вăййа арçынсем те, хĕрарăмсем те, ачасем те, ваттисем те выляма пултараççĕ. Нью-Йоркри пирĕн клубра кам кăна пулмасть пулĕ – Олимп



тÿпине хăпарма ĕмĕтленекен ача-пăчаран пуçласа вăрттăн мелпе ĕçлекен наркополицейски таранах! Хама ÿкĕте кĕртме ирĕк панăшăн, çак ĕçе укçа хывнăшăн пĕрре те ÿкĕнместĕп.

**– Кинора та хăюлăхпа палăратăр эсир – сексуаллă авантюристкăсене пĕр шиксĕр калăплатăр...**

– Çапла, енчен те, сюжетпа килĕшÿллĕн, ватăлса пыракан хĕрарăмăн хăйĕнчен çамрăкрах арынпа çыхăнăва кĕмелле тĕк тÿрех ман пата чупса пыраççĕ. “Шурă кермен” фильмра та, унта Джеймс Спэйдер вылять, çапла пулса тухнăччĕ. Анчах та мана çакăн евĕр рольсем хама та килĕшеççĕ – хĕрарăм ăслă та вĕсенче, кулăшла та. Эпĕ шăпана ĕненсе рольсем хыççăн хăваланă темеcтĕп, анчах çак сăнара пĕрре калăпларăм та Тимпа паллашрăм. Ун чухне эпĕ Римраччĕ, анчах “Дархэм вăкăрĕсем” ĕçре питĕ ÿкерĕнес килетчĕ. Чăн та, эпĕ вĕсене пачах та тивĕçтерменнине мана уççăнах каларĕç-ха. Ку, паллах, питĕ кÿрентерчĕ. Сăнавлă ÿкерĕнме хамах пытăм – чĕнмесĕрех. Мана роль... пачĕç. Анчах сăлтавĕ эпĕ питех те пултаруллă пулнипе пачах та çыхăнман – вĕсем чĕннĕ актрисăсем сăнав тапхăрне пачах та пыман: çак роль хăйсемшĕн юрăхсăррине палăртнă вĕсем. Çапла майпа эпĕ рольлĕ кăна мар, упăшкаллă та пулса тăтăм! Тим Роббинс манăн, паллах, çамрăк еркĕн рольне калăпларĕ.

**– Анчах та сирĕн 15-ри хĕрĕр, калăпăр, 50 çулти арçыншăн пуç çухатсан эсир мĕн калăттăр-ши?**

– 15-ри пикен 50-ри арçынпа кăна мар, хăйĕн тантăшĕсемпе те – никампа та – савăшмалла мар!

Хам пирки калас тăк, эпĕ харăсах темиçе арçынпа çыхăну тытнине ырламастăп. Ĕçтешĕмсемпе те романсем пуçарса палăрман эпĕ. Çăлтăрсемпе – пушшех те. Эпĕ çамрăклах качча тухнă вĕт – çапла майпа арçынсен горизонтĕнчен сахалтан та 10 çуллăха çухалнă. Питĕ паллă çынсемпе пĕр-икĕ хутчен кăна курнăçнăччĕ. Француз режиссерпа Луи Мальпе çыхăну тытнăччĕ. Сăмах май, манран 15 çул аслăрах вăл. Пĕр-икĕ çула кăна тăсăлчĕ пирĕн хутшăну, анчах та маншăн пурнăç лайăх урокне çаврăнчĕ вăл. Луин хăйĕн трюфель ферми пурччĕ. Мана Европа кăтартрĕ вăл – эпĕ вăл вăхăталла унта пит çÿременччĕха. Паллă тепĕр сăнар – Дэвид Боуи. Тони Скотăн пĕрремĕш ĕçне – “Выçлăх” – ÿкернĕ чухне пулса иртрĕ ку. Манăн юратнă режиссерăн Ридли Скотăн шăллĕ вăл. Боуи – тĕлĕнмелле этем. Питĕ кăсăклăскер. Музыкант, художник, пĕр сăмахпа – улăп.

Капла вара эпĕ пурнăçра – кăлăк чăххи.

**– Калăр-ха, Брэд Питт карьери мĕнлерех аталанса пыни кăсăклă-и сирĕншĕн? Вăл шăпах эсир асăннă Ридли Скотăн 1991 çулта ÿкернĕ “Тельма тата Луиза” фильмĕ хыççăн пуçланчĕ вĕт.**

– Эпĕ ăна питĕ юрататăп. Вăл питĕ илĕртÿллĕ. Ун чухне, ÿкерÿ лапамĕнче, эпир пурте харăс тенĕ пек персе ятăмăр: “Вау! Мĕнле хитрескер!” Джина Дэвис каласа кăтартнă тăрăх, Брэдпа выляма ăна пĕрре те çăмăл пулман – актер чăнласах илĕртÿллĕ пулнипе шухăшсем тăтăшах арпашăннă... /Кулать/. Кулăшла каччă пек, анчах та профессионал шайĕнче асра юлнă вăл. Тепĕр чух режиссер йĕрĕнчен пăрăнма юрататчĕ. Автозаправка станцийĕнче сцена ÿкернĕ чухне те çапла пулса иртрĕ. “Ку илĕртÿллĕ кĕлеткере мĕн чухлĕ пултарулăх тапса тăрать!” – мĕлтлетрĕ шухăш ун чухне.

**– Сире “Оскар” илмешкĕн пилĕк хутчен тăратнă, анчах та ĕмĕтри премие эсир юлашки хутĕнче кăна тивĕçнĕ – 1996 çулта “Виле килет” фильмшăн...**

– Маншăн урăххи пĕлтерĕшлĕ – хита çаврăннă фильма Тим Роббинс ÿкернĕ...

**– Сирĕн хĕр качча тухнă, мăнук парнеленĕ. Эсир пепкĕре канашпа пулăшатăр-и?**

– Мĕн эсир? Эва яланах лару-тăрăва алăра тытать. Вăл вăхăталла мана çамрăклах тухтăрсем хăрушă диагнозпа “савăнтарнăччĕ” – амăшĕ пулаймастăп-мĕн эпĕ. Пĕр вăхăт куляннă хыççăн лăпланнăччĕ ĕнтĕ. Анчах та пурнăç кĕтменлĕхсенчен пуян. 38 çулта итальян режиссерпа Франко Амуррипе паллашрăм. Римри каникул вăхăтĕнче хамăн çие юлнине пĕлтĕм. Ку кăна мар – Испани паллă картлашкисем çинче çие юлнă пулĕ тетĕп-ха! /Кулать/. Тĕлĕнмелле парне. Анчах хутшăнăвăн малашлăхĕ çуккине эпĕ ун чухнех ăнланаттăм. Çавăнпа та пулас ача ашшĕне хам çума çыхса хурас мар терĕм.

**– Халĕ ывăлăрсем те – асли, 25-ри Джек, кино шкулĕнчен вĕренсе тухнă, режиссура енĕпе пĕрремĕш утăмсем тăвать, кĕçĕнни, 22-ри Майлз, музыкант – кирек хăш самантра авланма пултараççĕ вĕт.**

– Эпĕ вĕсене çапла вĕрентнĕ – лайăх хĕрарăм çумĕнче пулас килсен итлеме тата апат хатĕрлеме пĕлмелле: ирхине те, кăнтăрла та, каçхине те! Вĕсем иккĕшĕ те, телее, çакна ăша хывреç, пĕлеççĕ. Майлз тата кукăль тĕлĕнсе каймалла тутлă пĕçерет! /Кулать/.

**/«7 Дней»/.**

## ☺ И-ХИ-ХИК ☺

Упа, кашкăр тата мулкач пĕрле пурăннă. Упа кусенчен пĕр савăт пыл пытарса хунă. Пĕррехинче упа ĕçпе тухса каять. Хайхи пыла тупнă мулкач кашкăр патне пырать:

– Атя çисе яратпăр.

– Мĕн эсĕ?! – хăраса каять кашкăр. – Пĕлсен иксĕмĕрĕнне те пуç касать вĕт!

– Эсĕ ухмаха пер. Пыл пирки ыйтсан куçна-пуçна тавăрса кăна кăтарт.

Çапла калаçса килĕшеççĕ те. Упа киле таврăнсан тӳрех пыл çухалнине асăрхать. Паллах, киле юлнисенчен ыйтать.

– Мĕн куçна-пуçне тавăрса пăрахрăн? – тет мулкач. – Каласа кăтарт йăлт упана.

* * *

– Кăсăклă: урăх йытă çинче пурнăç пур-ши? – тет пĕр пăрçа теприне.

* * *

Зоопаркра асăрхаттарса çырса хунă: "Страуссене ан хăратăр – урайне бетон сарнă".

* * *

– Мĕнле лайăх манăн хуçа: çитерет, ĕçтерет, уçăлма кăларать. Ахăртнех, вăл – турă! – шухăшлать йытă.

– Мĕнле лайăх манăн хуçа: çитерет, ĕçтерет, ачашлать... Ахăртнех, эпĕ – турă! – шухăшлать кушак.

* * *

Истори урокĕнче.

– Паян эпĕ сире инквизици çинчен каласа парăп – ун чухне çынсене çунтарнă, – ăнлантарать вĕрентекен.

Вовочка аллине тăсать:

– Ыйтма юрать-и: лаборатори ĕçĕсем пулĕç-и?

* * *

– Мĕн, татах ĕçсе таврăнтăн-и?

– Кăшт анчах вĕт.

– Ĕнер те "кăшт анчах", виçĕм кун та – çапла-и?

– Çапла, хĕвелĕм! Анчах та епле туйрăн-ха эсĕ?

– Мĕн туймалла марри? Çĕртме уйăхĕ çитрĕ, эсĕ вара çаплах кашни каç гараж тăрринчи юра тасатма çӳретĕн.

* * *

– Манăн арăмăн такам пур пулас, – тет пĕр арçын юлташне.

– Мĕншĕн апла шухăшлатăн?

– Эпир Вологдăран Мускава курăнма куçрăмăр ĕнтĕ – пирĕн пата вара çав сантехниках çӳрет...

* * *

Арăмĕпе упăшки телевизор пăхаççĕ.

– Ачасем çывăрса кайсан иксĕмĕр, пĕлетĕн-и, мĕн тăватпăр? – пăшăлтатать хĕрарăм упăшкине хăлхаран.

– Мĕн?.. – арçын ирĕлсе каймалли кăна.

– Вĕсен Çĕнĕ çул хутаçĕсенчи канфетсене çиетпĕр...

* * *

– Манăн чун тухса кайсан та арăмăн юлашки сăмахĕ: "Нимĕн те ĕçлес марришĕнех ятарласа вилсе выртрĕ!" – пулать-тĕр, – мăкăртатать арçын юлташĕ умĕнче.

* * *

Ювелир лавккине арçын пырса кĕнĕ.

– Мĕн тери аван эсир шăпах пирĕн пата кĕни! – пуçлать чĕвĕлтетме сутуçă. – Халĕ, уяв тĕлне, хаксем самаях чакрĕç. Калăпăр, çак çĕрĕ сирĕн савни пӳрнине питĕ илем кӳмелле.

– Манăн савни çук... – хаштах сывлать арçын.

– Мĕнле – савни çук?! – куçпуçне вылятма пуçлать сутуçă. – Çакăн пек арçыннăн та савни çук-и? Çӳллĕ, яштака, илемлĕ... Мĕншĕн çук вара савни?

– Арăм ирĕк памасть...

* * *

– Паян эпĕ юлташа хăнана чĕнтĕм, – пĕлтерет ĕçрен таврăннă арçын арăмне.

– Эсĕ ăсран тайăлнă-им? – тарăхать хĕрарăм. – Хваттере тирпейлемен, ачан сăмси юхать, çимелли нимĕн те çук, эпĕ япала çума шухăшланăччĕ – вăл вара хăна йыхравлать!

– Çавăнпа чĕнтĕм те, – тет арçын, – куртăр. Унсăрăн вăл юлашки вăхăтра тăтăшах авланасси çинчен калаçма пуçларĕ.

* * *

– Раççей кушакки Европăринчен мĕнпе уйрăлса тăрать?

– Кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнче ирпе ирех апат ыйтса кăшкăрни пурнăçшăн та хăрушă пулма пултарнине Раççей кушакки юн шайĕнче ăнланать.

* * *

– Çук, эпир сирĕн шалăва ниепле те ӳстерейместпĕр.

– Юрĕ, темех мар, çакăн чухлех юлтăр эппин, анчах тăтăшрах парса тăрсан аван пулмалла.

* * *

– Ывăлăм, мĕнле унта экзаменсем санăн?

– Хакланнă, атте.

* * *

Повара вĕренекен хĕрĕнчен амăшĕ ыйтать:

– Хăвăр хатĕрлекен апата çиме ирĕк параççĕ-и хăть сире?

– Хистеççĕ! – куççуль витĕр хуравлать хĕрĕ.

* * *

Тăваттăри ачин хăлхи ыратма пуçласан амăшĕ пепкине çавăтса лавккана эрех туянма кайнă – компресс тумашкăн. Ачаллă хĕрарăм эрех туяннине курсан кассир сивлесе пуçне сулланине асăрхасан пепки амăшĕн хутне кĕрет:

– Эсир темĕн ан шухăшлăр – манăн анне ĕçмест. Ку – ман валли.

* * *

– Рядовой! Автомата тасатма мĕнрен пуçламалла?

– Сери номерĕнчен.

– Мĕнрен-мĕнрен?

– Ют автомата мĕн тесе тасатмалла-ха манăн?

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

### ПРОДАЮ

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого, **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 89603016374.

**7.Срубы для бани.** Т. 37-28-74.

**8.Гравмассу,** песок, **щебень,** торф, кирпичный бой, **керамблок, керамзит.** Пенсионерам, уч. ВОВ – скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок, щебень,** керамзит, чернозем. Т. 8-903-358-30-21.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил,** гвозди, **столбы,** проволоку. Изготовление ворот, калиток. **Доставка.** Выездная сварка /генератор/. **Грузоперевозки.** Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок, щебень, керамзит,** чернозём. Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 38-97-13.

**15.Кирпич – любой.** Т. 89613393363.

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производ-ля: чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов; **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

**19.Гравмассу, песок,** керамзит, **бой кирпича.** Т. 89033225766.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; кровля, обшивка домов, **навесы.** Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 89022881447, 38-75-74, **metalservis21.ru**

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 89033456307, 89176757528.

**23.Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Д-ка. Т. 8-906-135-52-41.

**26.КЕРАМБЛОКИ** /20х20х40, 12х20х40, 10х20х40/, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, **к/кольца.** Доставка. Т. 8-903-346-85-56.

**33.Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 8-937-386-66-29.**

**48.Керамблоки, кольца** колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. **Т. 89063814420.**

**53.ОТРУБИ, ЗЕРНО,** к/корм, **сахар, мука.** Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу,** щебень, **песок,** керамзит, **бетон,** чернозём, **навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**77.ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 12000 р., 3х8 – 15000 р. Т. 48-16-54.

**117.ОКНА Чувашии.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 8-905-028-11-82.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 8-927-668-93-03.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок, щебень.** Д-ка. Т. 8-902-327-75-85.

**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**450.КЕРАМБЛОКИ** пропаренные, вибропрессованные – недорого. Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**560.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**685.ТРОТУАРНУЮ ПЛИТКУ, брусчатку** – дёшево. Распродажа. Доставка. Укладка. Т. 89033220479.

**686.Песок, щебень, гравмассу; вывоз** мусора. Т. 8-903-322-04-79.

**687.Профнастил, металлочерепицу, водостоки.** Скидки. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

### УСЛУГИ

**51.Бурение колодцев,** скважин, кольца колодезные высококачественные. Доставка. Тел.: 8-927-847-71-43, 8-937-379-00-80.

**115.Наркология. Трезвая жизнь.** Т. 8-902-663-20-80. *Лиц. 5001001230 от 8.06.2007г. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**152.Бурение скважин** на воду. Т. 89603021293.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. Скидки. Т. 89276687574.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС –** от 10 до 20 тн. Т. 89876734754.

**513.Чистка колодцев. Т. 8-961-342-90-59.**

**575.ЭКСТРАСЕНС.** Т. 89876603929.

**688.Кровельные, фасадные работы.** Гарантия. Т. 8-903-322-04-79.

### КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 8-962-599-47-06.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т. 8-960-310-98-78.

**333.Бычков, тёлок, коров, свиноматок.** Т. 8-937-014-49-97.

### РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

### ТĔРЛĔРЕН

**670.**Кивелнĕ электропроводка – пушар хăрушлăхĕ, кайран вара чавса çывăх та çыртма çук. Ялти **çуртсенче, хваттерсенче электропроводкăна улăштаратпăр.** Тел. 8-937-015-35-40.

## КĂСĂКЛĂ

# Мунча кунĕ

Мунча кунĕ 11-мĕш ĕмĕртех çырăнма тытăннă. Вырăссен вĕри пăспа исленсе çăвăнас йăли чылай маларах çурални те паллă. Мунча пуянсен ырлăхĕ мар, халăха çăвăнма май паракан вырăн шутланнă. Çавăнпах кунта пурте пĕр тан праваллă пулнă. Мунча хисепре пулнăран вăхăт иртнĕ май хăйне евĕр йăла-йĕрке те çуралнă. Çемьери мĕн пур пысăк пулăма унпа çыхăнтарнă: хĕре мунчаран качча панă, хăна килсен те тӳрех мунча хутнă.

1649 çулта ятарлă указ тухнă. Унпа килĕшӳллĕн, пурăнакан çуртран аяккарах пахчара кашниех мунча хăпартма пултарнă. Вĕсене эрнере пĕр хутчен хутма юранă. Халăх, паллах, вырсарни кĕлĕ умĕн тасалнă. Çавăнпах шăмат куна мунча кунĕ теме тытăннă.

«ХЫПАР» Издательство çурчĕ" автономи учрежденийĕ

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ: ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИ, ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ИНФОРМАЦИ ПОЛИТИКИН ТАТА МАССĂЛЛĂ КОММУНИКАЦИСЕН МИНИСТЕРСТВИН "ХЫПАР" ИЗДАТЕЛЬСТВО ÇУРЧĔ" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АВТОНОМИ УЧРЕЖДЕНИЙĔ

Директор – тĕп редактор В.В.ТУРКАЙ

Сырăнмалли индекс: 11515

Редактор – М.М.ИЛЬИНА

Дежурнăй редактор – М.Р.ТУМАЛАНОВА

Хаçата Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев служби 2013 çулхи ака уйăхĕн 30-мĕшĕнче ПИ № ФС77-54016 номерпе регистрациленĕ.

РЕДАКЦИПЕ ИЗДАТЕЛЬ АДРЕСĔ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев проспекчĕ, 13, Пичет çурчĕ

ЫЙТСА ПĔЛМЕЛЛИ ТЕЛЕФОНСЕМ: 55-07-21, 56-00-67, 56-03-54, 28-83-67, 28-85-33.

Факс: /8352/ 28-83-70, 56-20-07

Электрон почти: hypar@mail.ru

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" Федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", «Самана таппи»** рубрикăсенче пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 19 сехет те 30 минутра алă пусмалла, 19 сехетре алă пуснă. Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ. Тираж 7875. Заказ 4078.